ХЫПАР

Чăваш ачисен хаçачĕ

# Тантăш

6+

11 (4425) №, 2015, март /пуш/, 19
(1931 çулхи январĕн /кăрлачăн/ 12-мĕшĕнче тухма тытăннă).

Хакĕ ирĕклĕ.
Индексĕ: 54802.

# Кунтах юнгăсем... Спецназсемпе кадетсем



***Калинино шкул директорĕ Татьяна Павловна Ефимова кунта вĕрентекен пулса килнĕренпе нумай шыв-шур юхнă. Ун чухнех вăл: «Ачасен лайăх енĕсене аталантарма вăй-халăма хĕрхенмĕп», – тесе хăйне хăй сăмах панă. Чăн та, çав сăмаха çилпе вĕçтермен хастар педагог. Кунтан вĕренсе тухнисем чылайăшĕ хăйсен пурнăç çулне тупса çĕршывшăн ырă ĕçсем тăваççĕ.***

Паян та ку шкулта пурнăç вĕресе çеç тăрать. Юнгă, космонавт, спецназ, кадет, пограничник класĕсене хастар та пултаруллă ачасем çӳреççĕ. Педагогсем пулăшса, хавхалантарса тăнăран районпа республикăра çеç мар, Раççей шайĕнче те палăраççĕ. Ачисен те, педагогĕсен те пĕр пушă вăхăт çук. Тĕрлĕ ăмăртура çитĕнӳ тăвас тесе тăхтавсенче те, урок хыççăн юлса та репетици, тренировкăсем ирттереççĕ. Вĕренекенсенчен пĕри те: «Ывăнтăм, пултараймастăп», – тесе каламасть. Ара, кашниех хăйсен отрячĕсен ячĕсемпе хисепленекен паттăрсем пек пулас тĕллевлĕ-çке.

Акă нумай пулмасть шкула Валерий Андреевич Федоров контр-адмирал çитрĕ. Ахальтен мар. Ара, пиллĕкмĕш юнгă класĕ унăн ячĕпе хисепленет вĕт-ха. Хаклă хăна пушă алăпа килмен. Тĕлпулура класс ертӳçипе çирĕм икĕ ачана тельняшка парнелерĕ. Унсăр пуçне кĕнекесемпе хавхалантарчĕ.

Вăрнар районĕнчи Услапа ялĕнче çуралса ӳснĕ Валерий Андреевич контр-адмирал сăмахне кашниех тимлĕ итлерĕ. Унтан пиллĕкмĕшсем пĕри те тепри сăмах илме пуçларĕç.

– Манăн та сирĕн пекех ырă кăмăллă та пысăк çын пулас килет. Кирек хăш вăхăтра та пурне те пулăшнă пулăттăм. Ӳссе çитсен кам пуласси пирки пĕрре мар шухăшланă эпĕ. Çапах та тухтăр ĕçĕ кăмăла каять. Мĕншĕнне те калама пултаратăп. Пĕррехинче чирлесе выртăм. Аппа сыватрĕ. Çакăн хыççăн çуралчĕ те манăн пысăк ĕмĕтĕм, – палăртрĕ хăй шухăшне Ульяна Иванова.

– Истори предметне чунтан килĕштеретĕп. Йăлтах Тăван çĕршыва, аттеаннене, вĕрентекенсемпе тус-юлташа юратнăран çакă, – терĕ Аня Дмитриева.

Ушкăн ертӳçин Артем Яковлевăн пĕтĕмлетӳ сăмахĕ те кашнин чунне пырса тиврĕ.

– Хисеплĕ Валерий Андреевич! Эсир шкула килни – пирĕншĕн уяв! Чаплă уяв... Чыслă уяв. Сирĕн кашни сăмахăр ахах пĕрчи. Эсир вĕрентсе каланине нихăçан та асран кăлармăпăр. Ӳлĕм тăрăшса вĕренĕпĕр, шкул ятне çӳлте тытăпăр. Эсир парнеленĕ тельняшкăсене кашниех типтерлĕ упрасса шанса тăратăп. Эпир сирĕн парнĕрпе кăмăллă, – терĕ хăпартланса.

*Луиза* ***ВАСИЛЬЕВА.***

➲➲➲ 6-7-мĕш стр.

**Мартăн 31-мĕшĕччен çеç «Тантăш» хаçата, «Тетте», «Самант» журналсене почта уйрăмĕсенче йӳнĕ хакпа çырăнтараççĕ. Васкăр, юратнă кăларăмсемпе çитес çурçулта та туслă пулăр!**

# «Кĕрен парăс» чуна тыткăнларĕ...»



«Хальхи шкул ачисем Интернетра кунĕпе те çĕрĕпе ларма хатĕр. Вĕсене чармасан çав ешчĕкрех кун-кунлаççĕ», – тет нумайăшĕ. Вăйăсемсĕр пусне хайхискерсене нимĕн те кăсăклантармасть иккен. Паллах, ун пеккисем сахал мар. Анчах та Интернет «капкăнне» çакланманнисен йышĕ ытларах. Çапла мар-и? Çапла.

Акă сăмахран, улттăмĕш класра ăс пуханакан Настя Кольцова кĕнеке вулама çав тери юратать. Компьютер умĕнче ларма унăн вăхăчĕ те çук. Вăл яланах шкулти вулавăша çĕнĕ кĕнекепе паллашма васкать. Литература урокĕсене юратаканскер çыравçăсен хайлавĕсене кăмăлтан вулать. Тĕрлĕ халăх юмахĕсем, фантастика произведенийĕсем те Настьăна яланах илĕртеççĕ. Вĕсене тирпейлĕ вырнаçтарнă çÿлĕксем патĕнчен вăл лăпкăн ниепле те иртсе каяймасть-çке. Алла илсе çавăнтах вулама пикенет. «Манăн чи юратнă кĕнеке – Александр Гринăн «Кĕрен парăсĕ», – тет Настя телейлĕн çиçекн кусĕсемпе. – Пурнăçра пулма пултарайманни çинчен çырса кăтартни, хайлав ырăпа вĕсленни чăннипех те тыткăнларĕ чуна. Тĕп сăнарсем – Ассольпа Грэй – пĕр пĕринпе тĕлпулни еплерех савăнтарчĕ тата!»

Кĕнекепе мĕн пĕчĕкренех туслăскер тĕрлĕ пултарулăх конкурсĕсене хаваспах хутшăнма кăмăллать. Шкулта йĕркелекен «Выразительное слово» конкурсра кашниччех палăрать вăл. Акă кăçал Михаил Лермонтовăн «Мцыри» поэминчи пайсене пăхмасăр илемлĕн вуласа иккĕмĕш вырăна та тухма пултарчĕ.

Юлташĕсем те Настьăран тĕслĕх илеççĕ. Ара, вăл вĕренÿре лайăх паллăсемпе çеç ĕлкĕрсе пырать-çке! Тантăшĕсене пĕр сăмахсăрах пулăшать. Тусĕсемпе пĕрле виççĕмĕш класранпах «Изюминка» ташă кружокне çул такăрлатаканскер: «Питĕ килĕшет мана кружокра! – тет хаваслăн. – Эпир унта тĕрлĕ халăхăн авалхи тата хальхи вăхăтри, эстрада ташшисене ташлатпăр. Тĕрлĕ конкурса хутшăнса шкул чысне хÿтĕлетпĕр. Нумай пулмасть кăна-ха пĕрремĕш вырăн çĕнсе таврăнтăмăр».

Каникулта та, пушă вăхăтра та Настя ахаль ларма пултараймасть. Пур çĕрте хăйне тĕрĕслесе пăхма хăнăхнăскер вăл. Хĕлле конькипе е йĕлтĕрпе ярăнас кăмăл çуралать çеç – тÿрех вĕсем çине тăрать те çил пек вĕçтерет. Çыхма та, тĕрлеме те ăста. Алĕçĕсен конкурсĕсенче те пĕрре мар палăрнă. Пултаруллă хĕрача хăйĕн çитĕнĕвĕсемшĕн амăшне чунтан тав тăвать. Вăл шкул директорĕ, çав вăхăтрах вĕрентекенре те тăрăшать. Амăшĕ, чи çывăх çынни, хĕрачашăн тĕслĕх вырăнĕнче. Настя та шкултан вĕренсе тухсан аслă пĕлÿ илсе учительте ĕçлес ĕмĕтпе çунатланса пурăнать.

«Тантăш» вулаканĕсене вара вăл юратнă хаçата нумайрах çырусем çырма, аслисен сăмахне яланах итлеме сĕнет.

# Йывăр пулсассăн та тÿснĕ



Валентина Григорьевна Щербина 1923-мĕш çулхи мартăн 18-мĕшĕнче Патăрьел районĕнчи Шăхач ялĕнче çуралнă. Çăмăлах пулман унăн шăпи. Вăрçă тути-масине туйса, чăтăмлăхне çухатмасăр тăшманпа кар тăрса кĕрешнĕ çынсенчен пĕри. Валентина Григорьевна пĕчĕк чухнех унăн амăшĕ вăхăтсăр çĕре кĕрет. Ашшĕ тепре авлансан ачисен ама çури амăшĕпе пурăнма тивет. Вăрçă пуçлансанах пиччĕшĕпе ашшĕ фронта тухса каяççĕ. Сакăр ачи тăлăххăн тăрса юлать. Çак паттăрсем халĕ те хыпарсăр çухалнисем хушшинче шутланаççĕ.

– Эпĕ кĕпепе çуралнă çын, – тет манăн кукамай. – 1933-мĕш çулта тиф чирĕ питĕ анлă сарăлчĕ. Ялти çынсем пĕрин хыççăн тепри вилетчĕç... Тус-тантăшсемсĕр юлтăм. Манăн та çак кун çитрĕ пуль терĕм. Чире пула виçĕ кун тăна çухатса выртнă эпĕ. Çапах та ăна çĕнтертĕм-çĕнтертĕмех, – каласа парать тутăр вĕçĕпе куççульленнĕ кусĕсене шăлса. Вăл халĕ те çав кунсене йывăррăн аса илет.

Эпĕ хăнана пырсан кукамай мана ырă та ăшă пил сăмахĕсемсĕр нихăçан та кăларса ямасть. «Тăрăшса вĕрен! Ватăпа ватă пек, çамрăкпа çамрăк пек пул!» – тет пиллесе. Кукамай çичĕ çул ялти шкулта вĕреннĕ.

– Вăрçă – этем историйĕнчи чăтайми çулсем. Асап, выçлăх, куççуль, ырату... Çак йывăр шăпа кашни çын витĕр чĕрене кастарса тухнă. Хĕрарăм пулсан та тăватă çул тракторпа ĕçлерĕм. Йывăрлăха тÿсмеллех пулнă. Тăрăшни сая каймарĕ, Çĕнтерÿ кунĕ çитрĕ! 1945 çулта вăрçă хирĕнчен юратнă çынна кĕтсе илтĕм. Икĕ ача, хĕрпе ывăл çуратса ÿстертĕмĕр», – тесе вĕçлерĕ хăйĕн калаçăвне кукамай.

Ватăр çул почта уйрăмĕнче ĕçленĕ вăл. Çил-тăвăллă çанталăкра кÿршĕ ялтан сумка тулли хаçат-журнал çĕклесе утасси çăмăл мар пулнă. Халĕ вара тăхăрвунă икке çитрĕ юратнă кукамай. Вăл паян та алă усса лармасть – ĕçе хăнăхнăскер тĕрлĕ чăлха-алсиш çыхать, тĕрлет, çăм арлать. Мĕнле кăна алĕç тума пĕлмест вĕт-ха вăл! Юратнă анне, хастар кукамай, маттур асанне, ырă кÿршĕ – çакăнпа чунтан савăнса, кашни кунпа киленсе пурăнать телейлĕ ватă хĕрарăм.

Çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул сунатăп сана, юратнă кукамай!

***Маша САМДЕЛОВА,***
***ЧПУ, 2-мĕш курс.***

# Шпагат ларасси нимĕн те мар!



Çак класрах вĕренекен Катя Николаева, математикăпа туслăскер, цифрăсен тĕнчинче хăйне телейлĕ те ирĕклĕ туять. Вăл «Математика – наукăсен патши», – калаçăша мала хураканскер, çак предмета тарăнрах вĕренес тĕллевпе кружока çÿрет. Пĕлĕвне аталантарать.

Катя – вĕренÿ отличници. Хăйĕн çивĕч ăсĕпе, тавракурăмĕпе вăл шкулта тахçанах палăрма ĕлкĕрнĕ.

– Çанă тавăрса тăрăшсан çеç çакăн пек çитĕнÿсем тума пулать, – тет маттурскер.

Пурнăçра ыррине те, усаллине те пайтах тĕлпулма тÿр килет теççĕ. Яланах «пиллĕк» паллăсем илме хăнăхнă Катюша пĕррехинче «тăваттă» «çаклатнă». Ку ыттисемшĕн темех мар пек. Анчах хĕрача питĕ куляннă çакăншăн. Темле пулсан та ăна тÿрлетме шут тытнă та тĕллевне кĕске вăхăтрах пурнăçланă. Çакăн хыççăн вăл тата тăрăшарах вĕренме пуçланă.

Катя чăннипех те хастар хĕрупраç. Вăл кашни конкурса, вăййа, викторинăна хаваспах хутшăнать. Ыттисемпе тупăшса хăйĕн вăйне, пултарулăхне тĕрĕслесе пăхни нимрен ытла илĕртет ăна. Çавăнпа Катя яланах малти ретре. Ушкăнпа тупăшнă чухне вара тантăшĕсем ăна яланах командира суйлаççĕ. Ку ахальтен мар. Катя командир чухне вĕсем çĕнтерессе пурте пĕр иккĕленмесĕр ĕненеççĕ-çке.

Пуринпе те çăмăллăнах пĕр чĕлхе тупма пултараканскерĕн тус нумай. Вĕсенчен чи çывăххи – Даша.

– Даша – манăн шанчăклă та хаклă тусăм. Вăл халь хулара вĕренет. Эпир унпа тăтăшах çыхăну тытатпăр. Телефонпа, Интернетра скайп урлă калаçатпăр. Питĕ тунсăхлатăп уншăн эпĕ, – терĕ Катя ассăн сывласа. – Вăл лайăх вĕрентĕрччĕ тата ан чирлетĕрччĕ çеç.

Унран «Пушă вăхăта мĕнле ирттеретĕн?» – тесе кăсăклансан «Çекĕлпе çыхма кăмăллатăп, – сăпайлăн йăл кулчĕ. – Акă кукамая хĕл кунĕсенче ăшăрах пултăр тесе çемçе те ăшă тутăр çыхса парнелерĕм...»

Мĕнле маттур вĕт-ха вăл! Катя мĕнпур вăхăтне вĕренÿре ирттерет пулсан та тĕрлĕ енлĕн аталанма та май тупма тăрăшать. Килĕнче хăй тĕллĕн тĕрлĕ задача шутлать кăна тетĕр-и?

Катя спорта та юратать, тĕрлĕ хускану тăвать. Ÿт-пÿ илемĕшĕн тăрăшсах гимнастикăпа çывăх туслашнă. Шпагат ларма та пĕлет. Çак меслете пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн хăнăхнă вăл. Пĕрремĕш хут шпагат ларсан вара мĕн тери савăннă! Чăн-чăн çитĕнÿ тунăн туйăннă ăна çак самантра.

Çапла, пĕрре тĕллев лартнине пурнăçлама хăнăхнă Катя. Хăйĕн ĕмĕчĕсем патне çирĕп утăмсемпе çывхарать.

***Нина ЦАРЫГИНА.***

Шупашкар районĕ,
Ишек шкулĕ.

# ĂШĂ САЛАМСЕМ

*Саламсене пĕлтермелли номерсем:*
89876741833
89051975911

Ачаранах спортпа туслă (хăвăрт утас енĕпе), тĕнче пĕлтерĕшлĕ спорт маçтăрне, Патăрьел районĕнче çуралса ÿснĕ, халĕ Кооператив институтĕнче ĕçлекен **Александра Тимофеевна ДЕВЕРИНСКАЯНА** сумлă юбилей ячĕпе саламлатăп. Пенсие тухсан та ĕçлеме çăлкуç пек вăйхалу тапса тăтăр, ырă кăмăлу пурне те ăшшăн çупăрлатăр. Телейпе ăнăçу юнашарах çÿреччĕр.

***Нина МИХАЙЛОВА.***

Элĕк районĕ, Мăн Карачура ялĕ.

Муркаш районĕнчи Шетмĕпуç шкулĕнче вĕренекен **Розмарина ВАСИЛЬЕВĂНА** çуралнă кун ячĕпе саламлатпăр. Чечек пек илемлĕскере çирĕп сывлăх, вăрăм та телейлĕ пурнăç сунатпăр. Кашни кун илемлĕ пулăмсемпе пуян пултăр!

***Çывăх юлташĕсем.***

Ĕнер пирĕн хаклă çыннăмăр **Катя ИЗИС** хăйĕн черетлĕ çуралнă кунне паллă турĕ. Ăна çак паллă кун ячĕпе саламласа пурнăçра чи ыррине çеç сунатпăр. Пултарулăхра татах та çитĕнÿ тума, яланах малтисен ретĕнче пыма сунатпăр.

***Салампа тăванĕсем тата тусĕсем.***

Чĕмпĕр облаçĕ, Чăнлă районĕ, Аслă Нагаткино.

Тантăш
чăваш ачисен хаçачĕ

● УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ
Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви; Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин «Хыпар» Издательство çурчĕ» Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.

● ХАÇАТ ИНДЕКСĔ:
54802 - (çур çула) - Чăваш Республикинче,
11466 - республика тулашĕнче.

● Редакципе издатель адресĕ:
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "Хыпар" Издательство çурчĕ" АУ техника центрĕнче калăпланă."Чувашия" ИПК" ПУП типографийĕнче пичетленĕ.
428019, Чăваш Республики,
Шупашкар хули, И. Яковлев пр., 13.

● "ЧУВАШИЯ" ИПК" ДИРЕКТОРĔ:
Тел.: 56-00-23

● ДИРЕКТОР - ТĔП РЕДАКТОР
В.В.ТУРКАЙ

● ТЕЛЕФОНСЕМ
директор-тĕп редактор: 56-00-67
редактор, çырусемпе
тата юнкорсемпе ĕçлекен пай: 28-83-86
шкул ачисен пайĕ: 28-85-69
спорт тата экологи пайĕ: 56-11-80
право, кăмăл-сипет пайĕ: 28-83-89
факс: (8352) 56-15-30
бухгалтери: 28-83-64

● РЕДАКТОР
В.ФЕДОРОВ

● НОМЕР ВУЛАВÇИ
Н.ЦАРЫГИНА

● КАЛĂПЛАВÇĂ
Н.ПЕТРОВА

● ЭЛЕКТРОН АДРЕС:
e-mail: tantas@list.ru

● ТИРАЖ
1799 экз.
çав шутра Чăваш Республикин тулашĕнче – 191 экз.

● ЗАКАЗ
№ 996
Пичете март уйăхĕн 18-мĕшĕнче алă пуснă.

● ПИРĔН САЙТ:
www.hypar.ru

Газета «Тантăш» («Ровесник») зарегистрирована Управлением Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций (Роскомнадзор) – свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ТУ21-00306 от 10.12.13 г.

Ⓟ паллăпа реклама материалĕсене палăртнă

Пичете графикпа 15 сехетре алă пусмалла, 14 сехет те 00 минутра алă пуснă.

# Литература тата К.В.Иванов çулталăкĕ – ЧУЛКАСРА



Литература тата К.В.Иванов çулталăкне халалласа республикăра тĕрлĕ мероприяти иртет. Чулкас шкулĕ те айккинче юлмасть. Кунти пурнăçа наукăпа практика конференцийĕсем, конкурс-ăмăртусем кăсăклатаççĕ.

Çулталăк пуçламăшĕнче «Сывă пултăр Литература!» ятпа йĕркеленĕ каç питĕ кăмăллă иртнĕ. Ачасем патне Литература çулталăкĕн тĕп сăнарĕсем – А.С.Пушкин, Н.В.Гоголь тата А.А.Ахматова – килсе çитнĕ. 5-9 классенче вĕренекенсем вĕсене классиксен сăввисене илемлĕ вуласа савăнтарнă, «Повесть временных лет» тата «Слово о полку Игореве» кĕнекесенчи хайлавсем тăрăх лартнă инсценировкăсемпе паллаштарнă. Литература каçĕ асамлă сывлăшпа тулнине пула вăхăт иртни те сисĕнмен. Çавăнпа акт залĕнчен пурте тулли кăмăлпа тухнă.

Нумаях пулмасть вара «Константин Васильевич Иванов – ялкăшса тăракан талант» темăпа йĕркеленĕ конференцире ачасем классик пурнăçĕпе пултарулăхне çутатса паракан презентацийĕсемпе паллаштарнă. Унсăр пуçне 5-9 классенче вĕренекенсем К.В.Иванов произведенийĕсем пирки тухса калаçнă. «Нарспи», «Тăлăх арăм», «Шуйттан чури», «Икĕ хĕр» тата ытти хайлавсем çинче тĕплĕнрех чарăнса тăнă. Жюрисем ĕçсене пахаланă хыççăн çĕнтерӳçĕсен йышне çак маттурсене кĕртнĕ:

**1-мĕш вырăн** – Валя ФЕДОРОВА (8 класс);
**2-мĕш вырăн** – Алина ПАВЛОВА (7 класс);
**3-мĕш вырăн** – Саша ЕГОРОВ (6 класс).

Ачасем «Нарспи» поэмăна тĕпе хурса лартнă спектакль сыпăкĕсемпе сцена çинчен ял халăхне савăнтарнă. Тĕп рольсене саккăрмĕш класри Марина Порфирьева тата çиччĕмĕшĕнчи Алексей Миронов калăпланă.

Вĕренекенсем Константин Иванов произведенийĕсем тăрăх ӳкерчĕк туса курав та хатĕрленĕ. Çак ĕçе кашниех хастар хутшăннă, хăй евĕрлĕхĕпе палăрнă.

Çулталăк пуçланнă кăна-ха, вĕрентекенсем тата чылай мероприяти ирттерме палăртнă. Çав шутра чăваш литературин классикĕн хайлавĕсен вулавĕ те, Чăваш патшалăх академи драма театрне çитсе курасси те. Литература çулталăкĕн тухăçĕ пуласса, калем ăстисем йышланасса шанас килет.

## Пултаруллисен «Туслăхĕ»

Шкулта «Туслăх» фольклор ушкăнĕ ĕçлет. Ăна çак тăрăхра чăвашлăха упраса хăварас тĕллевпе йĕркеленĕ. Унта çӳрекен 4-6 класс ачисем (вуниккĕн-вунтăваттăн) районти конкурссенче час-часах малти вырăнсене тивĕçеççĕ.

Ачасем вăййăра, выртмара тата халăх йăли-йĕркине сăнлакан ытти ĕç-пуçа выляса кăтартаççĕ. Кашăкпа та, балалайкăпа та, купăспа та тĕрлĕ кĕвĕ калама пултараççĕ. Юррисене музыка предмечĕн ертӳçи Владимир Павлович Антонов вĕрентет. Сценарисене йĕркелесе пыракан\ĕ вара – Галина Петровна Иванова. Фольклор ушкăнĕ Вăрмарта, Муркашра, Куславккара тата республикăн ытти кĕтесĕнче пултарулăхĕпе паллаштарма ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Чăвашла тумланса сцена çине тухса юрă-ташăпа савăнтаракан маттурсем чĕрĕ пуканесен евĕрех курăнаççĕ. Паллах, çак ачасенче чăвашлăх пуласлăхĕ тапса тăрать.



## «Пирĕн лидер – Алина»



Ушкăнра яланах пĕри те пулин ертӳçĕ пулмалла, ăна эпир лидер теме хăнăхнă. Вăл ыттисене хăратса, тĕрлĕрен ĕç хушса ертсе пыракан мар, çакна хăй те асăрхамасăр ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăракан. Çиччĕмĕш класра та çавăн пек хĕрача пур. Вăл – Алина Павлова. Тантăшĕсем яланах ун пек пулма ăнтăлаççĕ. Мĕншĕн тесен Алина пур çĕрте те хастарлăхпа тата пултарулăхпа палăрать. Класра мероприятисем йĕркелекенни те вăлах. Тĕрлĕрен олимпиадăна, конкурса, тĕпчев ĕçне хутшăнать, чăваш чĕлхипе çыхăннисене ытларах кăмăллать. В.Алентее халалланă район конкурсĕнче пĕрремĕш вырăна тухнă. Çавăн пекех вăл юрлама та, ташлама та ăста. Пултаруллă çемьере çитĕнекенскер ялти Культура çуртне çӳресе ăсталăха туптама тăрăшать. Хăй тĕллĕн хусканусем шухăшласа кăларса ташă хатĕрлеме те маçтăр, кĕçĕн класри ачасене час-часах пулăшать. Хĕрачара артист таланчĕ пурри сисĕнет. Ахальтен мар вăл район шайĕнчи «Театр искусстви» наукăпа практика конференцийĕнче В.Алентейĕн «Хырсем ем-ешĕл» повеçĕнчи Марук сăнарне ăста калăпланă та çĕнтерӳçĕ ята тивĕçнĕ.

Амăшĕ Алинăна мĕн пĕчĕкрен ĕçе юратма, ваттисене хисеплеме вĕрентет, алĕçĕпе аппаланма та вăлах хăнăхтарнă. Çывăх çыннăн сăмахĕсене ăса хывакан хĕрачана таврари çынсем те ырлаççĕ. Чăнах та, Алина тантăшĕсемшĕн çеç мар, шкулти пур ачашăн та ырă тĕслĕх.

## «Малтан чăвашла пĕлсен, кайран вырăсла вĕренме çăмăлрах»



Хулара ӳсекен ачасем вырăсла пуплени никамшăн та вăрттăнлăх мар. Ашшĕ-амăшĕ вĕсене ыттисемпе хутшăнма йывăр ан пултăр тесе тăван чĕлхене вĕрентме васкамасть-çке. Юрать-ха, ялти асламăшĕ-кукамăшĕсем маттур – мăнукĕсенчи чăвашлăха сӳнме памаççĕ.

Тăваттăмĕш класри Настя Леонтьевăн çемйи темиçе çул Мускавра пурăннă. Анчах вăхăтра яла таврăннине пула хĕрача вырăслансах ĕлкĕреймен. Кукамăшĕ, Ираида Владимировна Петрова, мăнукне тăван чĕлхене юратма, тĕрĕс калаçма вĕрентсех пырать.

– Малтан чăвашла пĕлсен, кайран вырăсла вĕренме çăмăлрах, – тет хĕрача питĕ шухăшлăн. Хула ачисемшĕн чăваш чĕлхи урокĕ мĕн тери асаплă иртнине шута илсен çак сăмахсемпе килĕшетĕн.

Вĕренӳ отличникĕ вăл, спортпа та туслă. Пушă вăхăт тупăнсанах урамра йĕлтĕрпе е конькипе ярăнать. Ял тата шкул вулавăшĕсенче тăтăшах чăваш тата вырăс кĕнекисене «шĕкĕлчет».

Пĕррехинче юлташĕ музыка шкулне çӳрессине пĕлтерсен, кĕвĕ инструменчĕсемпе паллаштарсан Настьăн чĕри хыттăнрах тапма тытăннă, унăн та кĕвĕ тĕнчипе паллашас килнĕ-çке. Халĕ вăл амăшĕпе пĕрле эрнере виçĕ хутчен Вăрмарти музыка шкулне çӳрет. Юрă-кĕвĕ ăсталăхне иккĕмĕш çул вĕренет ĕнтĕ, баян калама та пĕлет. «Катюша», «Линкка-линкка» юрă кĕввисене янăраттарса параять. Елена Николаевна вĕрентекен пулăшнипе хĕрачан таланчĕ уçăлсах пырать. Чайковский пурнăçĕпе тата пултарулăхĕпе кăсăкланакан, унăн хайлавĕсене кăмăллакан хĕрача сахал мар çитĕнӳ тăвĕ-ха.

## Сăпайлă самбист



Çиччĕмĕш класри Дмитрий Васильев кăçал Нижний Ломов хулинче В.В.Белоусов преподаватель-тренера асăнса ирттернĕ Пĕтĕм Раççейри самбо турнирĕнче 2001-2002 çулсенче çуралнă арçын ачасен ӳсĕмĕнче виççĕмĕш вырăна тухнă. Çакă пысăк çитĕнӳ мар-и? Маттур ачашăн шкул та, ял-йыш та савăнать. Иван Николаевич Никитин тренер вара арçын ачана лăпланса лармa памасть, ăсталăхне тата ӳстерме хистет, çитес ăмăртусенче пьедесталăн чи çӳллĕ картлашкине йышăнма хатĕрлет.

Димăн ашшĕпе амăшĕ хăй вăхăтĕнче спортсменсем пулнă. Ачисене те вĕсем мĕн пĕчĕкрен сывă пурнăç йĕркине явăçтарма тĕллев лартнă. Тăваттăмĕш класранпах самбо секцине çӳрекен ывăлĕн çитĕнĕвĕсемшĕн питĕ хĕпĕртеççĕ вĕсем. Арçын ача Пензăра та самбо енĕпе виççĕмĕш вырăна тухнă. Республикăри ăмăртусенче çĕнсе илнĕ медальсемпе Хисеп хучĕсене вара пăхса ытарма çук. Апла пулин те Дима вĕсемпе мухтанмасть, юлташĕсем çине çӳлтен пăхмасть, аслисем каланине яланах итлет. Çавăнпа хисеплеççĕ те ăна тантăшĕсем.

Эпир вара Димăна спортра тата пысăкрах çитĕнӳ тума ăнăçу сунатпăр.

Вăрмар районĕ,
Чулкас шкулĕ.

АСĂРХАНĂР!

# Шывăн турачĕ çук

Пире хальхинче те Людмила Александровна, клуб ĕçченĕ, çуркунне ун йĕри-тавра пĕлтĕрхи çулçăсене шăлса тасатма пуçтарчĕ. Ачасемпе яланах пĕрле выляттăмăр, тĕрлĕ уявра концертсем лартма пулăшаттăмăр, ĕçленĕ чух та пĕрле.

Çуркунне, çырмасемпе варсенче шыв кĕрлесе юхать. Пирĕн клуб çырма хĕрринче ларать. Кун вĕçленсе те пырать ĕнтĕ. Пуçтарнă çулçăсене тирпейлесе пытăмăр. Унччен те пулмарĕ таçтан ача сасси илтĕнчĕ. Унталла-кунталла пăхрă-мăр – курăнмарĕ.

– Кунта вăл! – кăшкăрчĕç çырма енчен. Сас илтĕнекен еннелле пурте кĕпĕр-кĕпĕр чупрăмăр. Пăхатпăр та пилĕк çулхи Федя шывра, çыран хĕрринчи тымартан аран-аран тытăнни курăнать. Çитменнине тата вăл тепĕр енче. Хăраса кайрăмăр. Нимĕн тума пĕлмесĕр тăратпăр, нимĕнпе те пулăшаймастпăр. Леш енчи çырана вăл мĕнле лекни пурне те кăсăклантарчĕ.

Саша, тĕрлĕ ăмăртура чи хăвăрт чупакансенчен пĕри, ним шухăшласа тăмасăр аякранах чупса килсе çырма урлă сиксе каçрĕ. Вăл та шыва сикрĕ. Телее, юнашар йывăç ларатчĕ! Вăйлă арçын ача тытăнса тухрĕ тухрех. Унтан вара Саша Федьăна та туртса кăларчĕ. Пурте хĕпĕртерĕмĕр. Кĕç путман ачана çав самантрах киле ăсатрăмăр. Пĕр татса паман ыйту юлчĕ пирĕн пуçра: «Федя шыва мĕнле кĕрсе ӳкнĕ-ха? Çыран леш енне мĕнле майпа çакланнă-ши?»

Тепĕр кунне эпир пурте Федя кил умĕнче пухăнтăмăр. Чĕнсе кăлартăмăр, ыйтса пĕлтĕмĕр.

– Эп çыран хĕррине антăм. Шыв кĕрлесе юхни мана питĕ интереслентерчĕ. Хам та сисеймерĕм, ура шуса кайрĕ. Пĕр 3-4 метр шыв юхăмĕпе ишрĕм. Алла хыт-хура, туратсем çакланчĕç. Çирĕпрех тытăнсан сире кăшкăртăм. Юрать, йывăç тымарĕнчен тытăнтăм. Халь ăçта пулаттăмчĕ-ши, – хурлăхлăн каласа пачĕ Федя.

Федьăн амăшĕпе ашшĕ Сашăна тĕрлĕ парнепе тав турĕç. Эпир те питĕ савăнатпăр. Мухтанатпăр çакăн пек паттăрсем пирĕн хушăра пулнишĕн!

*Кристина БАЙБАТОРОВА.*
Çĕмĕрле районĕ.

Николай СЛАДКОВ

# Хĕллехи парăмсем

Тислĕк купи çинче Çерçи чакаланать. Хăй пĕр чарăнми чĕриклетет, сиккелет. Çакна Курак сăнарĕ-сăнарĕ те чăтаймарĕ:

– Мĕнле савăнăç санăн, Çерçи? Ниçта кайса кĕреймен пек тав-



рана янраттаратăн, – кранклатрĕ çу сĕрмен алăк тăпси пек хăйăлтатакан сассипе.

– Çунатăмсем çатăртатаççĕ, Курак! Сăмсам та кĕçтет, – вĕчĕрхенчĕ Çерçи. – Чăтма çук кĕрешес килет! Эс ытла ан кранклат, манăн çуркуннехи хаваслă кăмăл-туйăма ан пăс!

– Э-э, ав епле! Апла итле-ха манăн ыйтăва!

– Ой, хăратрăн та!

– Çапла çав! Эсĕ хĕлле çӳп-çап купинче пĕрчĕ шырарăн-и?

– Шырарăм.

– Вырăнти витти патĕнче тыр-пул тĕшшине пуçтартăн-и?

– Пуçтартăм.

– Шкул патĕнчи «кайăксен столовăйĕнче» апатлантăн-и?

– Тавтапуç ачасене, выçă вилме памарĕç.

– Вăт! Çак парăмусене мĕнле татма шухăшлатăн? Э? Кунĕпе чĕриклетсе-и?

– Эпĕ пĕччен пулман -çке унта! Кăсăя та, Улатакка та, Чакак та пĕрлеччĕ. Эсĕ те, Курак пирĕнпеччĕ... – çухалса кайрĕ Çерçи.

– Ыттисем пирки ан калаç! – çухărать Курак. – Кунта сан çинчен сăмах пырать. Парăма ăна татмалла! Пур йĕркеллĕ кайăк та çапла тăвать.

– Йĕркеллисем çапла тăваççĕ пуль-ха та. Анчах хăв вара? – тарăхса калаçрĕ Çерçи.

– Эпĕ пуринчен те малтан парăма тататăп! Илтетĕн-и хирте трактор кĕрленине? Эпĕ ун хыççăн утса сиенлĕ хурт-кăпшанкăна суйлатăп. Чакакпа Хура Курак та мана пулăшаççĕ. Пире кура ыттисем те тăрăшаççĕ.

– Эсĕ те ыттисене ан хутăштар! – хирĕçлет çаплах Çерçи. – Вĕсем, тен, тахçанах парăм пирки манса кайнă.

Курак та парăнмарĕ:

– Эс хăв кайса кур!

Вĕçсе кайрĕ Çерçи ыттисене тĕрĕслеме. Сад пахчине çитрĕ те Кăсăяна тĕл пулчĕ. Лешĕ çĕнĕ йăвана куçнă иккен.

– Саламлатăп! – терĕ Çерçи çакна курсан. – Савăннипе парăмусем çинчен те мантăн пуль-ха.

– Çук-çук, Çерçи! Мĕскер эсĕ! – хуравларĕ Кăсăя. – Мана хĕлле ачасем тутлă салăпа хăналарĕç, эпĕ вара садри улмуççисене хурт-кăпшанкăран сыхлатăп, вĕсене тасататăп. Кĕркунне ачасем сĕтеклĕ панулмипе сăйланĕç!

Кăсăяпа сывпуллашрĕ те Çерçи малалла вĕçрĕ. Вăрмана çитрĕ. Кунта Улатакка пĕр чарăнми йывăçа таккани илтĕнет. Çерçие асăрхасан тĕлĕнсех кайрĕ хайхи:

– Мĕнле сăлтавпа вăрмана килнĕччĕ, Çерçи?

– Парăма саплаштарма ыйтаççĕ манран... – терĕ лешĕ хаш сывласа. – Эсĕ, Улатакка, ăна мĕнпе тӳлетĕн-ши?

– Тăрăшатăп-ха, – хуравлать Улатакка. – Йывăççене сиен кӳрекен хурт-кăпшанкăран хăтаратăп. Кунĕн-çĕрĕн тăрмашатăп...

– Ав епле...– шухăша путрĕ Çерçи.

Каялла тислĕк купи патне таврăнчĕ вăл.

– Тĕрĕсех каларăн эс, Курак! Пурте хĕллехи парăмĕсене татаççĕ. Эпĕ те ыттисенчен юлас мар! Часах вăрăмтунасемпе пăвансене тытса чĕппĕмсене çитерĕп! Вара вĕсем арçын ачасемпе хĕрачасене текех çыртса тарăхтармĕç.

Савăнăçлăн тислĕке чакалама пуçларĕ Çерçи. Ара, чĕпписем хальлĕхе çăмартаран тухман-çке-ха.

*Вырăсларан*
*Нина ЦАРЫГИНА куçарнă.*

# Тăнăçлăх хуçалантăр...




Вăрçă – хăрушă, питĕ кăткăс пулăм. Вăрçă тесен çурăм тăрăх сивĕ чупать. Унтан хаярри, усалли тата мĕн пулĕ?

Кăçал Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пĕтнĕренпе 70 çул пулать. Вăрмар районĕнчи Энĕшпуç шкулĕнче паллă куна халалласа уяв ирттерчĕç.

Июнĕн 21-мĕшĕ, 1941 çул... Шăпах çак кун шкулпа сывпуллашакансен балĕ пулнă. Вăрçă пуçланни çинчен пĕлтерсен хăш-пĕр арçын ачасем çавăнтанах хăйсен тантăшĕсенчен уйрăлса ирсĕр тăшманпа кĕрешме тухса кайнă. Çак хăрушă самантсене вуннăмĕш класра вĕренекенсем сцена çинче кăтартса пачĕç. Тăрăшса, пĕтĕм чун хавалĕпе выляса куракансене иртнĕ кунсене аса илтерчĕç. Хăшĕсен куçĕсем те шывланчĕç. Çамрăк артистсен кăмăлне чунпа туйрĕç залра ларакансем. Уяв программине ачасем çар юррисем юрласа пуянлатрĕç.

Мероприятин иккĕмĕш пайĕнче Иван Васильевич Криков, музей директорĕ, хăй учитель пулса ĕçленĕ чухне йĕркеленĕ музейпа паллаштарчĕ. Унăн кĕске историйĕ çинчен, унти вăрçă темипе çыхăннă тĕрлĕ-тĕрлĕ истори, экспонатсем пирки те каласа пачĕ.

– Эпир хамăр класпа çакăн пек мероприятисене питĕ юрататпăр. Яланах хастаррăн хутшăнатпăр. Тĕрлĕ сценарисенче хамăр чуна уçса кăтартма тăрăшатпăр, – тет вуннăмĕш класра вĕренекен Дима Васильев. Вăл кăçал Вăрмар район администрацийĕн ертӳçин стипендине илме тивĕçнĕ. Маттурлăхĕ такама та савăнтарать.

Вуннăмĕш классем питĕ туслă. Кашни мероприятие тĕплĕн хатĕрленеççĕ. Хальхинче те вĕсем хăйсен тăрăшулăхне тепĕр хут çирĕплетрĕç.

– Яланах тăнăçлăх хуçалантăр çĕр çинче тата атте-анне, тус-юлташ юнашар пулччăр. Унтан хакли тата мĕн пур? – терĕ Дима тантăшĕсем çине ăшшăн пăхса.

*Кристина БАЙБАТОРОВА.*
Вăрмар районĕ,
Энĕшпуç шкулĕ.



# Ачасене ĕçчен те тăрăшуллă пулма сĕнет

**1962 çулхи утă уйăхĕ. Вăл Иран патшалăхĕ чиккинчи Астара (Азербайджан Республики) хулинче вырнаçнă заставăра хĕсметре тăни виççĕмĕш çула кĕнĕ. Чикĕ шутланакан юханшыв хулана икĕ çĕршыв (Иранпа СССР) пайĕсем туса хунă. Унăн та сарă кĕркунне хĕсмет тапхăрĕ вĕçленмеллеччĕ.**

Ун чухне çар командованийĕ виççĕмĕш çул салтак пăттине ăша хывакан "ватăсене" абитуриентсен йышне тăма ирĕк панă. Хăйсен тивĕçĕсене чыслăн пурнăçласа аслă пĕлӳ илме ĕмĕтленнĕ йĕкĕтсем институтсене кĕме çăмăллăхсемпе усă курнă. Герман та тăван енне таврăнсан хăйне Мускаври энергетика институчĕн Шупашкарти филиалĕн студенчĕсен ретĕнче курнă. Кĕç-вĕç пурнăçланмалли ĕмĕт сасартăк унран килмен сăлтавсене пула таталнă. Хăрушсăрлăх комитечĕ хăй çырнă приказĕпе чикĕ хуралçисене вăхăтсăр демобилизацилессине чарса лартнă.

– Çĕпĕрти пĕр лагерьтен айăпланнă хăрушă çын ирĕке тухса тарнă. – Çапла ăнлантарнă вăя кĕнĕ приказăн сăлтавне. Чикĕ сыхласси тĕнчери лару-тăрупа çыхăннă сисĕмлĕ ĕç. Çав çул Берлин хӳмине çĕклессипе те ĕçсем пынă. Асăннă пулăм, паллах, чи паллă услови пулнă.

Пулас сержантсен аллинчи "телей кайăкĕ" кĕтмен çĕртен вĕçерĕнсе вĕççе кайнă. Вĕсен пуçĕсем те усăннăччĕ ĕнтĕ.

– Инкекĕ пулман пулсан телейĕ те çуралман пулĕччĕ. – Çав каларăш асамлăхĕ вĕсем патне çурхи хĕвел евĕр çаврăнса çитнĕ. Пĕррехинче ăна Ленкорант хулинчи пур заставăсене те çыхăнтарса тăракан отряд командирĕн политика енĕпе ĕçлекен çумĕ унтан:

– Афанасьев сержант, сирĕн йышăну комиссийĕ валли документсем хатĕр-и? – тесе ыйтса тĕлĕнтерет.

– Хатĕр, капитан юлташ, – çийĕнчех хуравлать кĕçĕн командир.

– Çула тухма хатĕрленмелле, – хушать офицер. Кирек мĕнле лару-тăрура салтак яланах çула тухма тивĕç.

Вăрттăнлăх арчийĕ уçăлсан çĕнĕрен чĕрĕлнĕ хушу тупсăмĕ те пытанса юлман. Красноярск хулинчи Çĕпĕр технологи институчĕн ректорачĕ хăй вăхăтĕнче пограничниксен Ленкоранти отрячĕпе туслă ĕçлĕ çыхăну йĕркеленĕ иккен. Вăрман ĕçлекен промышленноç валли институт инженерсем хатĕрленĕ. Çĕпĕрти вăрман хуçалăхне çĕклесе тĕреклетме пултаракан пулас пысăк профессиллĕ специалистсене вĕсем пограничниксем хушшинче те шыранă. Ахальтен мар вĕсен çарĕ çирĕп сывлăхлă тата вичкĕн ăс-тăнлă çамрăксемпе кĕре шутланнă. Ректорат делегацийĕ çав çул та отряда çитме иртерех çула тухнă. Комитетăн çӳлерех асăннă приказĕ каярах вăя кĕнĕ май ун çинчен вĕсем вырăна çитсен кăна илтнĕ. Преподавательсемшĕн çулçӳрев ăнăçсăр вĕçленме пултарнă. Çапах та наукăпа техника керменне хисеплесе, вĕсен айăпсăрлăхне шута илсе, тăхăр ачана суйласа илме панă. Çавсен йышне Г.Афанасьев та кĕрет. Командованийĕн приказĕпе килĕшӳллĕн демобилизациленĕ тăхăр каччă чаçрен Çĕпĕре тухса кайнă. Пурте хăйсене шаннă командирсене тӳрĕлĕхпе чысласа пĕлӳ тĕнчине кĕме, унăн ăслăлăхĕпе усă курма васкаман. Тăваттăшĕ шухăшĕсене улăштарса тăван вырăнĕсене таврăннă. Ĕмĕт кĕвĕллисем кăна студент билетне алла илнĕ. Çапла Тури Çĕрпӳкасси ачи пĕрремĕш хут анлă Çĕпĕр алăкне уçса, инçет çути пек астаракан малашлăха ура ярса пуснă.

Пытармалли çук, хăй те унăн чунĕ инженер ĕçне куç хывнине шкул сакки çинче чухнех туйнă. Мĕншĕн тесен вăл пĕчĕклех сăнама юратнă. Ашшĕ картишĕнчи тăррине улăм витнĕ мастерскойра ĕçленипе яланах кăсăкланнă. Афанасий Илларионовичăн йывăçпа ĕçлеме хăй ăсталанă столяр верстакĕ ларнă. Стенасем çумĕнче вырăн хатĕрлесе ĕç хатĕрĕсене типтерлĕ упранă. Пуртăсене валли ятарлăн ăсталанă "кĕсьесене" чикнĕ. Фронтовик кашни инструментпа паллашма ирĕк парса вĕсен ĕç мелĕсен вăрттăнлăхĕсене те ăнлантарнă. Кăсăклă ача хатĕр-хĕтĕрпе хăй тĕллĕн ĕçлеме те, ăна юсама та пикеннĕ.

Сăнама пĕлни, тимлĕх пурри Германăн тавçăрулăхне анлăлатса ăнкарулăхне ӳстернĕ. Шчанас юханшăвĕн сулахай тайлăй çыранĕнче тĕпленнĕ çичĕ çул вĕренмелли шкултан "пиллĕк" паллăсемпе кăна пĕлӳ илсе тухнă. Вăтам пĕлӳллĕ пулас тесен ашшĕ-амăшĕн çулталăкне 150 тенкĕ тӳлеме тивнĕ. Афанасий Илларионовичпа Матрена Максимовна Илларионовсем Хĕрлĕ Чутай районĕнчи "Путь Ленина" колхозра ĕçленĕ. Вĕсем те ытти колхозниксем пекех ĕç укçи илеймен. Ун чухне ĕç кунĕпе валеçĕнекен тырă, утă-улăм, укçа хакĕллĕх тавар шутланнă. Патшалăх вара çĕр ĕçченĕнчен куланайне пурпĕрех пухнă. Ăна тӳлеме ирĕксĕрех укçа тумалли çĕнĕ çăлкуçсем шырама тивнĕ. Анчах кил хуçи ăна та тупайман. Аякка тухса кайса ĕçлеме ял Совечĕ справка паман. Çул çитиччченех Герман Володя пиччĕшĕпе чус-хăма çураканăн ĕçне хăнăхнă. Ашшĕ, Риван Ухванеçĕ, ял-йышра ăна çапла чĕннĕ, платник ĕçĕпе те тертленнĕ. Тара кĕрĕшсе ĕçленĕ чух та типтерлĕхĕпе, çыпăçулăхĕпе, алă ăстисем хушшинче палăрнă. Улми йывăççинчен нихăçан та аякка ӳкмен. Ку сăмахсем тӳрремĕнех унăн ачисене пырса тивнĕ. Вĕсем те ашшĕ пекех çынна хăйсен чун ăшшине парса пулăшнă. Çемье ят-сумĕ ялта асăнуллă пулнă. Саккăрмĕш класа çӳреме çул хупă пулнăран ашшĕ ăна юханшыв транспорчĕн ĕçченĕн профессине алла илме тӳлевсĕр вĕрентекен училищăна ертсе кайнă. Анчах та Ленинград ункинче аманнă нумай медальсен хуçине Чулхулари училище темшĕн кăмăла кайман. Хулара вĕренме хăвармасăр хăйĕнпе пĕрле каялла яла илсе килнĕ.

Пухнă пĕлӳ манăçа тухса пырасран вĕрентекенсем сĕннипе Герман иккĕмĕш хут 7-мĕш класа çӳренĕ.

– Мана тĕп предметсен урокĕсенче вăл е ку ансат ыйтусемшĕнех чăрмантармастчĕç. Енчен те ачасем умĕнче татса пама тивĕçлĕ тавçăрулăх кирлĕ пулсан кăна пулăшма ыйтатчĕç, – аса илсе калаçрĕ кил хуçи.

1956 çулта пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулăн вăтам сыпăкĕнче тӳлевсĕр вĕренмелли саккун тухать. Тинех Штанаш вăтам шкулĕн алăкĕсем пурин валли те уçăлнă. Вара тăван ялĕнче пĕр теçетке километртан самай аякра ларакан салана çӳренĕ.

Пур предметсен теори материалĕсене те çăмăллăнах ăса хывнине палăрнă. Çав вăхăтрах класс ертӳçине тĕрлĕ мероприятисене йĕркелесе ирттерме хастар пулăшать. Районти шкулсен çăмăл атлечĕсемпе йĕлтĕрçисен ăмăртăвĕсене хутшăнса спорт разрячĕн нормисене пурнăçлать. Вĕренӳ отличникне комсомолецсем хăйсен ертсе пыраканĕ пулма шанаççĕ. Çав обществăлла ĕçе пионерсен аслă вожатăйĕпе И.И.Лисаевпа (пулас чăваш прозаикĕ, публицисчĕ) тачă çыхăнса хавхаланса пурнăçланă. Вуннăмĕш класа кĕмĕл медальпе вĕçлесе хăйĕн пирки Штанаш шкулĕнче ырă ят хăварнă.

Пурнăçăн анлă çулĕ çине тухнă Г.Афанасьева районти çар комиссариачĕ Ульяновскри çыхăну çарĕн училищине кайма направлени панă. Вырăна çитсен, унти пулас çар офицерĕсен курсанчĕсемпе паллашсан, офицер пуласси чун туртăмĕ марри̇не ăнланнă. Курсант çар офицерĕн çулĕпе утас шухăша пăрахăçланă. Вунтăхăр çулхи çамрăка çар комиссийĕ чикĕ хураллама кăнтăра янă. Кунта ăна тӳрех кĕçĕн командирсен шкулне йышăнаççĕ. Вăл унта тытăнса тăман, ахаль салтак тивĕçĕсене пурнăçлама заставăна куçарма ыйтнă. "За отличие в охране государственной границы СССР" медалĕн кавалерне отделени ертӳçи пулма шаннă. Хастар комсомолеца кăкăрĕ çине "Отличный пограничник" паллăна çакса тивĕçлипе числанă.

Герман шухăш çулĕпе утса, çартан таврăнсан аслă пĕлӳллĕ энергетика инженерĕн дипломне алла илме те тĕллев лартнăччĕ. Халĕ вара малашлăхра ăна "Вăрман хуçалăхĕн инженерĕ" специальноçĕ кĕтнĕ. Мĕн ку? Тен курăнман вăйсен алхасăвĕ? Хăй кăмăлланă энергетика отраслĕн специалисчĕ пулма вăхăта васкатмалла марччĕ. Унăн ăна тата тепĕр çулталăк пурăнса ирттермеллеччĕ. Тен çавăнпа меллĕ пулăмпа усă курма васканă пулĕ çав.

Студентшăн хула пурнăçĕ кăсăклă пулин те çуллахи сесси хыççăн чунĕ пурпĕр яла туртăннă. Тăван килне çитме çулĕ вăрăм та питĕ тăкаклă-çке. Укçа ĕçлесе илсе хушăнакан тăкаксене саплаштарма ĕçе вырнаçма тивнĕ. Çавăнпа та вĕренӳ çулĕ вĕçленсен çуллен Енисей юханшывĕ çинче сулă юхтаракансен артельне кайса кĕрĕшнĕ.

Алла диплом илсе яланах чунне канăçсăрлантаракан Чăваш Ен çывăхнерех таврăнма ĕмĕтленнĕ. Анчах та ун чух хальхи пек мар, анчах пиçсе тухнă специалистăн ирĕксĕрех ятарлă комисси шухăшĕпе килĕшсе ăçта ĕçе янине пăхăнма тивнĕ. Анлă Совет çĕршывĕн кирек хăш кĕтессине те кайма пултарайман. Ятарлă комисси ларăвĕ йышăнăвĕпе вăл хĕрĕх ултă çул каялла Ленинградри "Гипролестранс" проект институчĕн Иркутскри филиалне çул тытать. Г.Афанасьева транспорт уйрăмне вырнаçтараççĕ.

Филиал вăрман турттармалли çĕнĕ çулсем, чĕр тавара (чăмăркка йывăççене) вырнаçтармалли анатри складсем уçма проектсем хатĕрленĕ. Г.Афанасьев вара проект валли кирлĕ материал пухма кашни çул çу кунĕсенче иртекен экспедицире тĕпчев ĕçĕсене тайгари çĕрĕн формине тишкерсе пурнăçланă. Пенсионер халĕ те тайгари юн ĕçен вăрăм туна, суккăр пăван тапăнса тертлентернине чăтса-тӳссе, чир-чĕре парăнмасăр ĕçленĕ тапхăра ниепле те лăпкăн аса илеймест. Уйрăммăнах экспедици членĕсене вĕтĕ ӳпре-шăна тумтир айне кĕрсе кайса хытă нушалантарнă. Тайгари тискер чĕрчунсенчен сыхланма пĕрле сунарçă пăшалне те çакса çӳренĕ. Йĕпе-сапара нӳрĕ палаткăсенче çĕр каçма кăвайт умĕнче типшĕннĕ. Типĕ паекпа та çырлахнă. Пурпĕр йывăрлăха чăтма тӳсĕмлĕх çитернĕ. Коллективра тӳрĕ кăмăллă, пуçаруллă ĕçчене хакланă. Ултă çул хушшинче техника пайĕн ахаль инженерĕ професси енĕпе ӳссе "тĕп специалист" ятне илнĕ.

Вăрман промышленноçĕшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ институтăн пултаруллă сотрудникне облаçри ертӳçĕсем асăрхамасăр хăварма пултарайман. Кĕçех ăна обкомăн вăрман тата йывăç ĕçлекен промышленноç пайне куçараççĕ. Яваплă вырăнта вунă çул хушши ырми-канми тăрăшать. Çав çулсенче облаçри вăрман хуçалăхĕнче çĕнĕ предприятисем хута каяççĕ. Вĕсенчен хăвачĕпе чи пысăкки Усть-Илим вăрман хуçалăхĕ шутланнă.

Ăна пенсие тухма хатĕрленекен пай заведующийĕ канăçсăр пуканне йышăнма пĕрре кăна мар ӳкĕтленĕ. Анчах та карьера пусми тăрăх çӳлелле улăхма ăнтălман инструктор унăн сĕнĕвĕсене йышăнман. Ăна чунĕ ытларах производство патне туртнă. Шăпах тата унăн телейне "Иркутскхимлес" производство пĕрлешĕвĕн генеральнăй директор çумĕ ларакан пукан пушаннă. Вăрман ĕçĕн технологине хăйĕн аллинчи пилĕк пӳрнисене пĕлнĕ пек тата ăна пĕр йăнăшмасăр тытса пыма пултаракан Герман Афанасьевича хаваспах йышăннă. Пĕрлешӳ халăх хуçалăхĕ валли питĕ паха сухăр хатĕрлессипе аталаннă. Çак чĕртавар химипе фармакологи отраслĕсемшĕн нимĕнпе те улăштарма май çук чĕртавар пулнă.

Çирĕммĕш ĕмĕрĕн сакăрвуннăмĕш çулĕсен пуçламăшĕнче çĕршывăн обществăпа политика тытăмĕнче киввине пăсас тĕллевлĕ çĕнĕ юхăм пуç çĕкленĕ. Унăн сĕрĕмĕ пĕрлешӳ тытăмне те сăрхăнса кĕнĕ. Герман Афанасьевич йӳçек шăршине хăнăхаймасăр тăван отрасльти облаçри профсоюзăн комитетне куçать. Çĕнĕ учреждени̇ре лесниксен, йывăç касакансен пурнăç йĕркине лайăхлатас тата вĕсен канăвне йĕркелекен пайя ертсе пынă. Ĕçри чысĕ хăех ăна ертӳçĕн пусми тăрăх çӳлелле çĕкленĕ. Пай заведующийĕнчен комитет секретарĕн картлашкине йышăннă. Ку ĕçлĕ вырăнăн ятне кайран улăштарнă. Председатель çумĕ тесе калама тытăннă. Черетлĕ пленум ларăвĕнче Герман Афанасьевича комитет председательне суйланă. Çĕнĕ шăпăр пулсан та çĕнĕлле шăлма пикенмен вăл. Коллектив членĕсене ĕçре пулăшса, вĕрентсе пынă, хăйне таса та ырă чунлă иккенне çеç кăтартма пултарнă. Паллах çак чыслă вырăна йышăннă ертӳçĕн лайăх енĕсене кĕвĕçекенсемсĕр пулман. Вăл йышăнакан яваплă должноçа ăмсанса ăна хура сăрăпа варалама та именмен. Ун пек юлташа ĕçре тытма май килмен.

Пĕррехинче Мускавран яланхи пекех отрасльти профсоюзăн Тĕп Комитечĕн черетлĕ Пленумне хутшăнма йыхрав илнĕ. Çав Пленум ларăвĕн кун йĕркинче организациллĕ ыйту та тăнă иккен. Йĕркене пăхăнса ун хушаматне малтан президиум йышне кĕртсе çирĕплетеççĕ. Хыççăн ларура пĕр саслăн Комитет председателĕн çумĕ пулма суйлаççĕ.

Çав çулсенче облаçри вăрман хуçалăхĕ çулталăкра 25 миллион кубла метра яхăн чăмăркка йывăç хатĕрлесе Архангельск облаçĕ хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăннă.

Çапла чăваш хресчен ачи Союз пĕлтерĕшлĕ ĕç лавне кӳлĕнсе ăна малалла туртса пынă. Ĕç тилхепине тивĕçлĕ канăва тухиччченех ăнăçлă тытса пыма савнă мăшăрĕ, Çĕпĕр хĕрĕ, тата ачисем, пулăшса пынă. Арăмĕ, Альбина Кирилловна та, аслă пĕлӳллĕ специалист.

Çемье пуçĕ пуян ăс-хакăлĕпе, анлă тавракурăмĕпе тата тараватлăхĕпе палăрать. Унăн пуян библиотекинче тĕрлĕ литература упранать. Шкул сакки çинче ларнă чухнех кĕнеке вулама юратнă. Ку йăлана кĕнĕрен кĕнекери шухăша кĕскен те витĕмлĕн палăртакан йĕркесене халĕ те хут çине куçарса пухса пырать. Калаçу чĕлхине те афоризм майлă йĕркелет. Калаçакана вĕçне çитиччченех итлеме пĕлекен çынна питĕ хаклать. Çынпа хутшăнса калаçасси уншăн – чăн-чăн ăсталăх.

Пограничниксен çарĕн запасри капитанĕн кăкăрне СССР Хĕçпăшаллă вăйĕсен 60 тата 70 çул тултарнă ячĕпе кăларнă медальсем илемлетеççĕ. Вăл ĕç ветеранĕ те.

Хăйĕн кун-çулĕ асăнмалăх хыçа хăварнă çулĕсене пĕрре кăна мар чĕри витĕр тишкерӳллĕн шĕкĕлчесе кăларнă.

– Этемлĕх историйĕн аталанăвĕнче çуралса хăйсен тасалăхĕпе тата тĕреклĕхĕпе çуталса халăх пурнăçне çирĕппĕн те улшăнмасăр кĕрсе юлнă: ан суй, ан çап, ан вăрла, ан вĕлер текен халалсемпе пурăнтăм. Ку чух та пурнăç урати çинче тăнă чух кун-çул уттин вĕçне çынлăха çухатмасăр чыслăн утса тухасшăн, – пĕлтерчĕ 75 çулхи Герман Афанасьевич Шупашкарти хăтлă хваттерĕнче иртекен тĕлпулăва вĕçлесе.

***Лев МЕДВЕДЕВ.***

(Малалли. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.).

# Кунтах юнгăсем... Спецназсемпе кадетсем

## Парне илме ансат, хаваслă... анчах...

Татьяна Павловнăн та савăнăçĕ виçесĕр пулни унăн питĕнче палăрчĕ.

– Ачасем, куратăр-и, Валерий Андреевич пирĕн пата пушă алăпа килмен. Вăл сирĕншĕн кашниншĕн хĕреснеатте пекех, кĕпе тăхăнтартрĕ. Çапла, парне илме ансат, савăнăçлă, кăмăллă. Çапах та, шухăшласа пăхар-ха, çак тельняшкăна тăхăнма тивĕç-и эпир? Ара, кун пек кĕпеллисем Тăван çĕршывшăн мĕн чухлĕ ырă ĕç тунă, паттăрлăхпа палăрнă... Апла пулсан пирĕн те вĕсенчен тĕслĕх илмелле. Вĕренӳре, спортра палăрмалла, нимĕнле йывăрлăхран хăрамасăр малалла талпăнмалла... Тăрăшсан – мĕн ĕмĕтленни пурнăçланатех, – терĕ пурин умĕнче те.

Хăй вăхăтĕнче Калинино шкулĕн сукмакне такăрлатнă Валерий Андреевич ачасемпе тĕлпулма яланах хавас. Çамрăксене ытларах кĕнекесем парнелеме тăрăшать вăл.

– Вулакан çыннăн çеç тавракурăмĕ анлă. Шкулта та лайăх вĕренекенсенчен пĕри вăл, – çирĕплетет çирĕппĕн.

Контр-адмирал ача чухне яланах библиотекăна чупнă. Илнĕ кĕнекесене çул çинче утнă çĕртех вуласа пынă. Килне çитиччен унти сăнарсен пурнăçĕпе, ĕçĕ-хĕлĕпе кăмăлтан паллашнă. Вĕсемпех хурланнă та, савăннă та... Тепĕр кунне каллех çитсе тăнă библиотекăна вулас кăмăллă арçын ача.

– Ачам, кĕнекӳсене ытла хăвăрт тавăрса паратăн. Вуламастăн пулĕ эсĕ, унти сăнӳкерчĕксене çеç пăхса тухатăн ахăртнех, – асăрхаттарнă пĕррехинче библиотека ĕçченĕ Ольга Ананьевна Ананьева ун çине шанмасăртараххăн пăхса.

– Мĕн эсир?.. Малти страницăран пуçласа вĕçне çитиччченех пĕр саспалли, пĕр йĕрке сиктерми вуласа тухатăп! – çирĕплетнĕ хайхискер.

– Темле çав, темле... Иккĕленӳллĕ. Апла пулсан содержани каласа парсам, – çаплах çине тăнă Ольга Ананьевна.

Валера хăй мĕн вуланине шакăртаттарса калама тытăнсан, чăнах та, ĕненнĕ ăна библиотека ĕçченĕ.

Ун чухнехи пурнăç çăмăл пулман. Выçăллă-тутăллă пурăннăран класра пĕрре мар тăнне çухатнă арçын ача. Çапах вĕренӳ çине алă сулман, чи лайăх вĕренекенсенчен пĕри пулнă. Кирек хăш экзаменра та нумай асапланса ларман, ыйту çине хăвăрттăн та хăюллăн хуравланă. Тем пек йывăр задачăсене те çăмăллăн парăнтарса «5» паллă илсе тухнă.

Кино та пăхма юратнă хастар вĕренекен, клуба каймалăх укçа пултăр тесе лавккана пилĕк пуспа пĕр çăмарта кайса сутнă.

Амăшĕ çав тери ăслă хĕрарăм пулнă унăн. Ачисене яланах аслисемпе кĕçĕннисене хисеплеме, ватăсене пулăшма вĕрентсе тăнă.

– Валера, эсĕ ĕнер ăçта пултăн? – ыйтнă пĕррехинче амăшĕ ывăлĕнчен.

– Урамрах, юлташсемпе çӳрерĕм, – хуравланă хайхискер.

– Урамрах пулнă пулĕ-ха та... Кăшт-кашт алхасман-и? – кăсăкланнă çаплипех вăл.

– Анне, эсĕ кун пирки ăçтан пĕлетĕн? – тĕлĕннĕ Валера.

– Çынсем икĕ куçлине пурте пĕлетпĕр, анчах хăшĕ-пĕрин вăл вуннă та пулать, ачам. Çавăнпа та, тархасшăн, йĕркеллĕ çӳрĕр, ята ан ярăр – ăс панă амăшĕ.

...Спортра та хастар пулнă Услапа йĕкĕчĕ. Хăйсенчен ултă çухрăмра вырнаçнă шкула çитсе килессине те йывăра хуман.

Пĕррехинче хĕлле, аслă класра вĕреннĕ чухне, физкультура урокĕнче юлташĕпе Коля Сорокинпа палăртнă вырăна йĕлтĕрпе çитмесĕр Çавал шывĕн çыран хĕрринче пытанса юлнă. «Эпир ахаль те кунне 12 çухрăм утатпăр, ак кунта, вырăнта пурăнакан ачасем чупчăр темиçе çухрăма», – тенĕ иккĕшĕ те пĕр шухăшлă пулса. Тус-юлташĕсем инçете кайса килнĕ, хайхискерсем вĕсен тĕлне çитсен икĕ тус вăшт çеç сиксе тухнă та ачасем хыççăн шкулалла вĕçтернĕ.

– Сорокин! Федоров! Эсир мĕншĕн тарламан? Мĕншĕн сирĕн пите хĕрлĕ сăн çапман?! – сассине хăпартнă педагог.

Иккен вĕрентекен ачасем мĕнле чупнине биноклпе сăнаса ларнă...

Çакăншăн каччăсен аттестачĕ çине паллă лартмасăр хăварнă... Тинĕс Çар флочĕн академине кĕме экзаменсене ăнăçлă тытнă Валерий Андреевич.

– Кунта пирĕн лайăх вĕреннипе кăна май килмест. Спорта юратман çын пире валли мар. Çапах та, турник çинче хăвăн ăсталăхна кăтартсам. Вунултă хутчен кĕлеткӳне йăтаймасан вара... – тенĕ офицерсем.

Услапа йĕкĕчĕ çавăн чухлĕ çеç мар, турник çинче вăтăр хут ытла туртăннă.

– Ĕнтĕ, çитĕ, çитĕ! Эсĕ чăнах та спорта юратнине ăнлантăмăр, анчах аттестатра мĕншĕн нимĕнле паллă çукки – пирĕншĕн тупмалли юмах, – тенĕ кĕскен.

Çар çынни пулма хатĕрленекен ывăлне амăшĕ:

– Вĕренсе тухнă хыççăн Шупашкара ĕçлеме килейĕн-ши вара? – кăсăкланнă пĕррехинче.

– Анне... Йывăра ан ил, анчах пултараймастăп... – пулнă кĕске хурав.

...Чи йывăр вырăна Инди океанне ярассине пĕлсен Услапа йĕкĕчĕ шухăша путнă.

– Мĕншĕн шăпах мана? Ыттисенчен мĕнпе уйрăлса тăратăп вара эпĕ? – ыйту памасăр чăтайман хайхискер.

– Унта ăслă çынсем кирлĕ. Санран пултарулли çук... – ăнлантарнă самантрах.

Йывăрлăхĕ пулман мар, ун пек чухне Валерий Андреевич чăвашла «Ан авăн шĕшкĕ, кăштах çил вĕрнипех» юрра шăрантарса чунне лăплантарнă. Вырăссем: «Эсĕ мĕн ялан мăкăртататăн хăв тĕллĕн?» – тесе пĕрре мар ыйтнă унран. Вăл вара юррăн сăмахĕсем мĕне пĕлтернине ăнлантарса, куçарса панă.

Яланах çынна ырă тăвакан Валерий Андреевич хăйне телейлĕ тесе шухăшлать.

– Хамăн пурнăçра миçе çамрăка задани парса инçе çула ăсатмарăм-ши? Вĕсем пурте каялла тĕрĕс-тĕкел, ырă-сывă таврăннишшĕн паянхи кунччен савăнатăп, – тет вăл.

Хăй чăваш пулнишĕн те мăнаçланать Валерий Андреевич. Çапах пĕррехинче чунне ыраттаракан ӳкерчĕк курнă та тарăн шухăша путнă.

Ун чухне, Мускавра метроран тухсан, пĕр чăваш çемйи тĕлли-паллисĕр ачисене вăрçса пынине курнă вăл. Малтанлăха сăмах та чĕнмен-ха. Кĕçех чарăнаççĕ пулĕ тесе шухăшланă. Çук, лешсем лăпланма мар, пушшех тулхăрса кайнă. Валерий Андреевич чăтайман енне:

– Ырă çыннăмăрсем, эсир çеç хăвăра çак тĕнчере чăвашла пĕлетпĕр тесе шухăшлатăр-им? – тенĕ асăрхаттарса.

Хайхискерсем çар тумлĕ çынна пĕр тĕлĕнсе, пĕр шикленсе пуç тӳпинчен пуçласа ура тупанĕ таранччен тинкернĕ.

– Эсир... Эсир те пĕлетĕр-им... чăвашла? – тенĕ аванмарланса.

– Пĕлетĕп. Сирĕнтен те аванрах пĕлетĕп. Çапах çын умĕнче ача-пăчана кăшкăрашса ăс пани килĕшӳсĕр, – çирĕппĕн асăрхаттарнă контр-адмирал хайхисене.

## Паттăр Сергей Ашихмина асра тытса...

Çиччĕмĕш спецназ отрячĕ Сергей Ашихмин ячĕпе хисепленсе тăрать.

– Çак класра ăс пухакансем, эпир пурте, Раççей Геройĕ пек хастар пулма тăрăшатпăр, – теççĕ çамрăксем.

Ушкăна Сергей Ашихмин ятне парасси те ăнсăртран пулса тухнă...

2012 çулта Хусанта вăрă-хурах пытанса ларнă вырăна штрумланă чухне Сергей Ашихмин пĕр террорист аллинче снаряд асăрханă. Майор хăрушлăха сиссе, пĕр тăхтамасăр ун еннелле ыткăннă... Иккĕшĕ те сирпĕннĕ... Темиçе офицер аманнă. Çапла Сергей Анатольевич хăй пурнăçне шеллемесĕр ыттисене çăлса хăварнă...

Шăп та лăп Украинăра çуралнă Сергей Ашихмин хăй вăхăтĕнче Татьяна Павловнăн ывăлĕпе, Ваньăпа, Мускаври çар институтĕнче пĕр ушкăнра вĕреннĕ. Инкек хыççăн Ваня амăшĕ патне шăнкăравланă.

– Анне, Сергей паттăр... – тенĕ.

– Ваня, тен, шкулти спецназ отрядне унăн ятне памалла? – палăртнă хăй шухăшне Татьяна Павловна.

– Анне, чăнах, аван пулĕччĕ... Ăна мĕн тери хисеплени пулать ĕнтĕ ку. Питĕ маттур ачаччĕ вăл. Хаваслă та ăслăччĕ. Йывăрлăхра пуça усмастчĕ, – тенĕ ывăлĕ.

**Андрей Григорьев** – спецназ ушкăн ертӳçи.



Ку ĕçе ăна хăйĕн тăрăшулăхне кура пиллĕкмĕш класранпа шанса панă. Вĕренӳ отличникĕ кăçал та районти çичĕ олимпиадăна хутшăнса шкул чысне тивĕçлипех хӳтĕленĕ. Математикăна юратаканскер Вăрнар тăрăхĕнчи çамрăксен хушшинче пĕрремĕш вырăна тухнă.

– Çитĕнӳ пĕччен тăрăшнипе пулаймасть. Юнашар пултаруллă педагогсем хавхалантарса та ăс парса тăни кирлĕ. Пĕлтĕр, Афганистан çĕрĕ çинчен салтаксене илсе тухнăранпа 25 çул çитнине халалласа Вăрнарта хăйне евĕр республика ăмăртăвĕ иртрĕ. Унта эпир, спецназсем, иккĕмĕш вырăн йышăнтăмăр! Çакă пысăк савăнăç мар-и-ха! Килес çул та тĕрлĕ ăмăрту-конкурса тата та ытларах хутшăнас кăмăлăм вышкайсăр пысăк, – ăнлантарать Андрей савăнăçлăн.

Вĕренӳ отличникĕ спортпа та туслă. Турник çинче чи нумай туртăнаканĕ те вăлах. Алă вăйĕпе хăйне çĕклес тĕлĕшпе те унран иртекен çук. Футбол, волейбол вылясси те чун иленĕçĕ.

– Спорта юратакан çын çеç сывлăхлă пулать. Эпĕ хулçурăма пиçĕхтерес тесе кашни кунах тăрăшатăп. Çар çынни пулас ĕмĕтпе çунатланса пурăнатăп. Тĕллевĕме пурнăçа кĕртес тесе пĕтĕм вăя хурса тăрăшăп, – тет мал ĕмĕтлĕ Андрей.

**Даша Карбачевăн** ашшĕ – чăваш, амăшĕ – вырăс. Апла пулин те хĕрĕпе амăшĕ халĕ чăвашла шăкăртаттарса калаçаççĕ. Пĕр-пĕрне сутса яраççĕ теççĕ ун пек чухне.



– Атте хăйĕн пулас мăшăрĕпе, аннепе, Брянск хулине вĕренме кайсан паллашнă. Кайран кунта, асаннепе асатте тăрăхне куçса килнĕ. Паян вара эпĕ спецназ класĕнче вĕреннишĕн чунтан хĕпĕртетĕп. Туслă эпир, походсене час-час тухса çӳретпĕр. Çавалта пулă та пĕрре мар тытнă. Уçланкăра пĕрле вĕренекенсемпе шӳрпе çиме те мĕн тери аван! Тĕрлĕ мероприятисене те хаваспах хутшăнса çитĕнӳ еннелле ăнтăлатпăр, – хăпартлансах калаçать хастар хĕрача.

Математика предметне чунтан юратать вăл.

– Ахальтен мар! Юратнă асаннем нумай çул лавккара сутуçăра ĕçленĕ. Çавăнпа вăл мана киле парса янă задача-уравненисемсĕр пуçне хăй ятарлă ĕçсем паратчĕ. Халĕ те çавах. Ĕнтĕ хам та математика енне туртăнатăп. Биологи предмечĕ те маншăн ют мар. Ӳкересси те кăмăла каять, тĕрлесси те чун иленĕçĕ. Çапах та шкултан вĕренсе тухсан шăл тухтăрĕ пулас килет, – тет Карбачевсен мал ĕмĕтлĕ хĕрĕ хăпартланса.

Апат пĕçерме те ăста вăл. Тĕрлĕ тутлă çимĕç янтăласа килтисене çав тери савăнтарать.

– Çапах та чи тутли – чăваш çĕрулминчен пĕçернĕ апат! Хамăр çитĕнтернĕ пахча-çимĕçрен усăлли тата пахи çак çĕр çинче çуках тăр! – çирĕплетет пике.

**Анна Николаевăн** та ӳсĕмсем пысăк. Вĕренӳре çеç мар, спортра та малта. «Тимлĕн тăрăшса ĕçлесен, пур çĕрте те ăнăçу пулатех», – палăртать Анна ялан.



Коньки-йĕлтĕрпе ярăнма тесен-и тата! Хăпăл-хапăл тусĕсем патне вĕçтерет. Ушкăнра автомат салатса пуçтарассине питĕ хăвăрт пурнăçлать.

– Хам эпĕ Кӳлхĕрринчен. Ялăн хитре вырăнĕсене шурă хут çине куçарма юрататăп тепĕр чухне. Ах, мĕн тери ӳкерме юрататăп эпĕ! Манашкаллисем ушкăнра татах та пур. Эпир спецназсем, ултăн, ӳнер кружокне кăмăлтан çӳретпĕр. Ума лартнă тĕллеве пурнăçлама хăнăхнăскерсем ăмăртмалла пейзаж ӳкеретпĕр. Пĕр-пĕринчен сĕнӳ-канаш ыйтмалли те тупăнсах тăрать пирĕн. Йывăрлăха кĕрсе ӳкекене вăхăтра алă пама тăрăшатпăр. Ырă ĕçсем тума яланах аслисенчен вĕренетпĕр. Педагогсем те кун пирки каласа-асăрхаттарсах тăраççĕ. «Çынна ырă туни – ырăпах таврăнать», – текен каларăша та нихăçан та манăçа кăлармастпăр, – тет уçă кăмăллă хĕрача.

Пушă вăхăтра алла кĕнеке, хаçат-журнал тытать Анна.

– Вуласан çеç ачан тавра-курăмĕ вăйланса аталанать, вĕренӳре ăнăçусеем тăвать, – тет пире шкул директорĕ Татьяна Павловна Ефимова хавхалантарса. Тĕп-тĕрĕс сăмахсем. Çавăнпа та эпир «Тантăш» хаçатпа «Самант» тата «Тетте» журналсемпе çав тери туслă. Вĕсемпе çыхăну тытни хавхалантарать, вĕренӳре, пурнăçра ӳсĕмсем тума пулăшать, – хăпартланать Анна.

## Эп кипкеллĕ-мĕн çуралнă аслă улăх варринче

Лев Николаевичпа Татьяна Павловна Ефимовсем тăрăшнăран 2007 çулта шкулта «Патриот» ушкăн йĕркелесе янă. Улттăмĕшсенчен чăн-



чăн кадетсем тăвас тесе вăй-халне шеллемен, чунне парса ĕçленĕ педагогсем.

Хăйсен вăйĕсене тĕрĕслес тĕллевпе Мускаври «Тăван çĕршыв ывăлĕсем» организаци ертӳçисем ирттернĕ республика шайĕнчи ăмăртăва пĕрремĕш хут хутшăннă «Патриот». Вăрнарсем йăрă та тавçăруллă пулни тĕлĕнтернĕ офицерсене. Хастар кадетсен пĕчĕк пӳрнисемпе аллисем выляса çеç тăнă – вăй-хăвачĕ сахалтарах пулсан та автомат сӳтсе пуçтарассине аслисенчен малтан вĕçленĕ. Салтак пек тӳрĕ утса юрлассипе, истори ыйтăвĕсене тĕрĕс хурав парассипе, бал ташши ташлассипе те вĕсенчен иртекен пулман. «Чи лайăх командир» ята та Дина Павлова тивĕçнĕ. Çĕнтерӳпе таврăннă шкула хастар çамрăксем.

Тата савăнмалли, хăпартланмалли те мăнаçланмалли те пур. Çак хастарсем 2012 çулта Мускавра иртнĕ Пĕтĕм Раççей ăмăртăвĕнче çĕнтерӳçĕсем пулса тăнă.

Ĕнтĕ ĕнерхи «Патриот» шкултан вĕренсе тухнă. Вĕсенчен кашни хăй суйласа илнĕ профессие алла илессишĕн чунне парса тăрăшать. Пурнăçĕсене çарпа çыхăнтарнисем вара хăйсене чи телейлисем тесе шухăшлаççĕ. «Эп кипкеллĕ-мĕн çуралнă, аслă улăх варринче! Тавах Сире, вĕрентекенсем... Пире ăс парса пысăк çул çине кăларнăшăн», – теççĕ вĕсем.

Паянхи «Çăлтăр» кадет ушкăнĕ те «Патриотран» тĕслĕх илет. Вĕсем пекех пьедасталăн çӳлти картлашки çине улăхасшăн. Малтанхи çитĕнĕвĕсем пур-ха, утăмĕсем сулмаклă. Пĕлтĕр октябрь уйăхĕнче Шупашкарта Ача-пăча пултарулăх керменĕнчи хĕрӳ тупăшура пĕрремĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

– Эпир – пĕрремĕш! Çав тери телейлĕ! Пирĕн савăнăç виçесĕр. Тунмастпăр, ăшра çĕнтерӳ пирки ĕмĕтленнĕ. Унчченхи кадетсен умĕнче пите хĕретме тивмерĕ. Çапах пирĕн те Раççей шайĕнчи ăмăртура вăя тĕрĕслесе пăхас тĕллев пур, – мăнаçланчĕ ун чухне кадет ушкăнĕн командирĕ Катя Судова.

Саккăрмĕш кадет класĕ Анатолий Иванович Григорьев ячĕпе хисепленет. Полковник час-час ачасем патне килсе çӳрет, паттăрлăх урокĕсем ирттерет. Парнесемпе хавхалантарать.

Анатолий Ивановичăн амăшĕ – украинка, ашшĕ – чăваш. Выçлăх вăхăтĕнче Полина Власьевнăна Чăваш Ене янă. Шăп кунта вăл чăваш йĕкĕчĕпе тĕл пулса çемье çавăрнă. 99 çула çитиччен пурăннă офицер амăшĕ.

– Полина Власьевна... Унăн ячĕ мĕн тери хитрен те çемçен илтĕнет. Чунĕ те çапла ырă пулнă унăн. Тăванĕсем Украинăран хĕвелçаврăнăш ярса парсан, вашават хĕрарăм ăна ăшаласа пĕтĕм ял халăхне хăналанă. «Хĕвелçаврăнăш çисе курман мар, анчах Полина Власьевна хатĕрленĕ пеккине нихăçан та тутанман ку таранччен», – тенĕ пĕри те пĕри. Улми йывăççинчен аякка ӳкмест теççĕ, чăнах. Анатолий Иванович та амăшĕ пекех ырă кăмăллă пулни пире хăпартлантарать, ĕçре çитĕнӳсем тума пулăшать, – тет Татьяна Павловна ентешĕпе мăнаçланса.

Нумай пулмасть шкула каллех полковник çитрĕ. Мăн Явăш ялĕнче çуралса ӳснĕ, пурнăçне çарпа çыхăнтарнă Эрик Васильевич Васильев та кадетсемпе тĕл пулу ирттерчĕ. Паянхи кун Эрик Васильевич Мускаври Пĕрремĕш кадет корпусĕнче вăй хурать.



– Иртнĕ вăхăта таврăнас пулсан... Кадетсенчен паллă çынсем нумай тухнă: çар паттăрĕсем, художниксемпе композиторсем, писательсемпе поэтсем. Алексей Алексеевич Брусилов генерал, Петр Александрович Румянцев фельдмаршал, Федор Федорович Ушаковпа Павел Степанович Нахимов адмиралсем те хăй вăхăтĕнче кадетсем пулнă. Тен, сирĕнтен те çавнашкал паттăрсем тухĕç. Ахальтен мар сирĕн ушкăн та «Çăлтăр» ятлă. Апла пулсан çӳл тӳпери çăлтăр пек çутă та таса пултăрччĕ кун-çулăр. Паянхи тĕллевĕм вара, сире хам ĕçлекен кадет корпусне илсе кайса çамрăксемпе тĕл пултарасси, вĕсен ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарасси, – палăртрĕ хăй шухăшне полковник.

Çак хыпар ачасене хавхалантарчĕ. Малашне вĕренӳре, спортра, тĕрлĕ ăмăртура çитĕнӳ тума сăмах пачĕ «Çăлтăр».

Паянхи тăваттăмĕшсем те – пулас кадетсем. Вĕсем те хитре тум тăхăнса тĕрлĕ ăмăртăва хатĕрленме тытăнĕç. Тĕрĕссипе, халех ăнтăлаççĕ кадет пулма арçын ачасемпе хĕрачасем. Класс ертӳçи Марина Валентиновна Матвеева вĕсене пĕрремĕш класранпа Тăван çĕршыва юратма, юрă-ташăпа, спортпа туслашма, аслисемпе кĕçĕннисене тата пĕр-пĕрне хисеплеме вĕрентнĕ. Çитĕнӳ тени те вăй хумасăр, тар тăкмасăр пулманнине пĕлеççĕ ĕнтĕ тăваттăмĕшсем. «Туслăхра – вăй», – текен каларăша та асра тытаççĕ хастарсем.

«Патриотпа» «Çăлтăра» кĕçĕн классенче Марина Валентиновна вĕрентнĕ. Хăй ăс панă ачасем çӳллĕ шая çĕкленни ăна та савăнтарать, ĕçре вăй-хăват хушать.

– Педагог профессине суйласа илнишĕн паянхи кунччен савăнатăп. Кукамайăн аппăшĕ, Мария Ивановна Григорьева, Шупашкарти шкулта вырăс чĕлхи вĕрентетчĕ. Ăна кура хăпартланаттăм мар-и-ха! Вăл вара Чĕмпĕр шкулĕнче мĕнле вĕренни пирки каласа пама тытăнсан çăвар карса итлеттĕмĕр... Мал ĕмĕтлĕскер пĕччененех Чĕмпĕре çул тытнă. Шыраса тупнă вăл шкула, хăюсăррăн алăка уçса шалалла иртме тытăннă. Анчах ăна Иван Яковлевич Яковлев:

– Халĕ занятисем пуçланнă. Кăшт тăхтасам. Кайран санăн пĕлĕвне тĕрĕслĕпĕр, – тенĕ çемçен.

Урамра кĕтсе ларнă вăл. Кăштахран шкул алăкĕ уçăлнă та пĕр çамрăк тухнă.

– Иртĕр шалалла, сире чĕнеççĕ, – тенĕ кĕскен.

Çак йĕкĕт Константин Васильевич Иванов пулнă иккен. Кăна вăл кайран çеç пĕлнĕ. Кукамайăн аппăшĕ вара çăмăллăнах вĕренме кĕнĕ Чĕмпĕр шкулне. Иван Яковлевич пирки ялан ыррине çеç калатчĕ. «Пирĕншĕн пуриншĕн те атте вырăнĕнче пулчĕ», – тесе ăшшăн аса илетчĕ, – терĕ хастар педагог.

Пĕлӳ çуртĕнчи Руслан Николаевич Желудкин ячĕллĕ пограничниксен отрячĕ те, Андриян Григорьевич Николаевпа Николай Михайлович Бударин ячĕпе хисепленекен космонавт ушкăнĕсен те тӳпи пысăк... Вĕсем те юлташĕсем пекех лартнă тĕллеве пурнăçлама малаллах ăнтăлаççĕ...

Вăрнар районĕ,
Калинино шкулĕ.
**АВТОР сăнӳкерчĕкĕсем.**

*Луиза ВАСИЛЬЕВА (тел. 28-85-69) хатĕрленĕ.*

# Сăвăпа чĕрем юрлать

## Николай Афанасьева асăнса

Аякра-аякра, пысăк сăрт патĕнче,
Вăрçă çулăмĕпе сăрт кисреннĕ чухне,
Тăвай енĕн каччи Афанасьев пичче
Çĕршыва упраса унта хунă пуçне...

Çÿллĕ сăрт тăрринчен вутлă хĕм тухнăран,
Салтаксен текехрен кайма вăй пулманран,
Микула çул уçма талпăнать малалла,
Вăрттăн çеç вăл шуса хăпарать сăрталла.

Пулемет шатăртатнă çĕре
Ывăтать вăл вут-хĕм «парнине».
Шăпланать пĕр самант пулемет,
Ак каллех-çке пуçлать вăл пеме.

Тĕшĕрлеççĕ туссем ахлатса
Пĕрин хыççăн тепри çĕр çине.
Пĕтĕм чун хăватне пуçтарса
Ыткăнать Микула дзот çине.

Пурнăçне шеллемесĕр çапла
Пуçне хунă ентеш паттăрла.
Вăл патвар та хастар пулнине
Манас çук, манас çук ĕмĕрне.

## Асамлă пуль

Анне чĕри – пурнăç таппи.
Асамлă пуль вăл çав тери!
Инкек-синкек сиксе тухсан
Сисет-çке вăл çакна ялан.

Ун пек чухне анне чĕри
Тупма пĕлмест хăй канăçне.
Тапма пуçлать тата вĕри
Мотор пекех-çке çав тери.

Ун пек чухне пирĕн анне
Куçне хупмасть çĕрĕпеле.
Хăйĕн асамлă вăйĕпе
Сиплет пирĕн сурансене.

*Ангелина ПЕТРОВА.*
Тăвай районĕ,
Тăвай шкулĕ.

## Ырă сунса

Вулакансене телей сунатăп,
Юрату та ăнăçу,
Ыр çын пуласса шанатăп,
Такăр пултăр сирĕн çул.

Сывлăхлă та çирĕп пулăр,
Пурнăç çулĕпе утса.
Кĕнеке те журнал вулăр,
«Самант» пултăр çав шутра.

Кĕске сăввăма вĕçлетĕп
Сире валли çеç çырса.
Пур çынна çапла чĕнетĕп:
«Пурнăр ырă ĕç туса!»



## Вăрçă

«Вăрçăра атте ман пулнă, –
Асанне çапла калать. –
Пурте вилнĕ, вăл çеç юлнă.
Тĕрлĕрен шăпа кулать».

Кашни çемье чунтан кĕтнĕ
Мăшăрне е ывăлне.
Тватă çул иртсен çеç пĕтнĕ
Вăрçă. Йывăр асилме.

Ачасем пĕчĕкренех
Ĕçлесе нуша çеç курнă.
Астăвать пуль кашниех:
Мĕнле йывăр ун чух пулнă.

Мĕн тума пуçланă-ши
Çак вăрçа тискер тăшман?
Ма айăплă пулнă-ши
Çĕршыври пур ют тăван.

## Ăшă калаçу

«Асаннесĕм, пĕрле лар-ха
Манпа кăштах калаçса.
Пурнăç çинчен сăмахлар-ха», –
Терĕм эпĕ йăл кулса.

Асанне ман пата килчĕ,
Ыталарĕ аллипе,
Куççульне шăлса та илчĕ
Кăвак тутăр вĕçĕпе.

«Пурнăç вăрăм, – терĕ шăппăн. –
Унта темĕн те пулать.
Йывăр кун иртсессĕн лăпкăн
Çĕнĕ тапхăр пуçланать.

Хăш чухне эс такăнатăн,
Ÿксен чун та ыратать.
Кайран ура çине тăратăн,
Пурнăç малаллах шăвать...

*Анжелика ИВАНОВА.*
Шупашкар районĕ,
Ăстакасси ялĕ.

## «Тантăш»

Эрнере ялан пĕр кун
«Тантăш» килет хăнана.
Мĕн тери кĕтет-çке чун!
Сиктерместĕп çав куна.

Маншăн вăл чăн хурăнташ,
Çирĕп кăмăллă юлташ.
Ватти-вĕтти хăй тавра
Пуçтарать сĕтел-çавра.

Тавра-курăм пуянран
Тем те çырса пĕлтерет.
Илĕртсе пире ялан
Тĕрлĕ конкурс ирттерет.

Нумайлантăр кунран-кун
«Тантăшпа» туслашакан.
Тухăçĕ те пултăр ун,
Ан хавшатăр нихăçан.

## Пулăç

Пулă тытма Атăла
Мĕн авалтан çÿренĕ.
Тÿсĕм кирлĕ тет çапла,
Унта кĕтме те вĕренĕ.

Пĕри тытнă тет çăрттан,
Панă çупкă теприне.
Çăрттан тарнă вăлтаран,
Çука хăварнă пулăçне.

Пулă тытма çăмăл мар:
Шăп, ан шавла, кĕтсе лар.
Кăмăлу аван пулсан
Тытсан ĕнтĕ савăнан.



## Чăх чĕппи

Эпĕ тупрăм чăх чĕппи
Симĕс курăк хушшинче.
Шиплетет вăл: «Пи-пи-пи!»
Мĕн чул илем ун çинче.

Мĕнле килсе лекнине,
Ăçтан ÿксе юлнине
Йĕри-тавра тинкерсе
Эп шырарăм хуçине.

Çук! Пăхмарĕç ун çине,
Тупаймарăм амăшне.
Парнелерĕм эп ăна
Пĕчĕк Ангелинăна.

Сăйласа печенипе
Ачашларĕ аллипе,
Чăмăртарĕ хăй çумне,
Ай, тав турĕ куçĕпе.

Ачасемпе выляса
Ÿсрĕ пĕчĕкскер вара.
Тăчĕ те автан пулса
Шав шăрантарать юрра.

Ирех тăма йыхăрать
Янратса уç сассипе.
Хуçине, тен, тав тăвать
Юрласа хăй чĕлхипе.



## Анне чĕри

Ир пулать е каç пулать –
Анне чĕри хумханать.
Ачисемшĕн кулянса
Çÿçĕ кайрĕ шуралса.

Çулĕ шăвать малалла,
Таврăнмасть вăл каялла.
Сыпăкран сыпăк куçса
Ĕмĕр иртет-çке çапла.

Анне хыççăн кукамай,
Асанне те эс пулатăн.
Мăнуксене курнă май
Чунтанах-çке савăнатăн.

Сывлăхпа телей ыйтса
Турра ялан кĕлтăватăн.
Ыр сунса, чунтан савса
Кăмăл ăшшине паратăн.

*Светлана НИКОЛАЕВА.*
Вăрмар районĕ,
Вăрмар поселокĕ.

## Çуркунне

Акă хĕртсе, выляса
Хĕвел пăхрĕ йăл кулса.
Юр та, пăр та ирĕлсе
Юхса кайрĕ кĕрлесе.

Хĕл ыйхинчен вăранса
Йывăç-курăк ешерет.
Курак йăва çавăрса
Чĕп кăларма хатĕрлет.

Шăнкăрч кĕнĕ вĕллене,
Эпĕ çакса панине.
Çунат çапса, юрласа
Ши! шăхăрать тав туса.

*Татьяна ЛЕСНОВА,*
*7 класс.*
Канаш районĕ,
Канашри 11-мĕш шкул.

## Вăрмана кĕрсессĕн

Эсĕ вăрмана кĕрсессĕн
Уç сывлăшпа сывлама
Чупса савăн та выля –
Кайăксене ан хăвала!
Чĕрчуна ан чăрмантар –
Вăрманта хуçа эс мар.
Унăн пур сÿнми хăват,
Вăрмана эс ан хумхат.

*Яна РАССАДИНА,*
*7 «б» класс.*
Канаш районĕ,
Канашри 11-мĕш шкул.



## Çутçанталăк

Хĕвел пăхать, ăшăтать,
Йĕри-тавра шыв юхать.
Йывăç-курăк ешерет,
Кайăк-кĕшĕк чĕвĕлтетет.
Илĕртеççĕ чечексем,
Кăмăла çĕклекенсем.

*Кристина НИКОЛАЕВА,*
*7 «б» класс.*
Канаш районĕ,
Канашри 11-мĕш шкул.

## Сыхлар

Çутçанталăка сыхлăр, çынсем!
Вăрмана, пăшине, шăшине.
Çÿп ан тăкăр, тархасшăн, туссем.
Тĕнчене юратасчĕ пĕрле.

*Б.НИКОЛАЕВ,*
*7 «б» класс.*
Канаш районĕ,
Канашри 11-мĕш шкул.

## Вăл пĕрре

Хисеплетĕп аннене,
Юрататăп аннене,
Мĕншĕн тесен вăл пĕрре,
Ялан пирĕн чĕрере.
Çĕр çинче чи çывăх çын,
Эсĕ маншăн чи пахи.
Çăлтăр пекех çутă çын,
Çук санран-çке лайăххи.

*Яна ЧУМАНОВА,*
*5 класс.*
Елчĕк районĕ,
Таяпа Энтри шкулĕ.

## Саламлатăп

Эх, аннесĕм, анне!
Ман юратнă анне!
Уяв çитнĕ ятпа
Саламлатăп сана.
Пушă вăхăт тупса
Вуласам сăввăма.
Уяв çитнĕ ятпа
Эпĕ хыврăм ăна.
Ялан сывлăхлă пул,
Нимле хуйхă ан кур!
Ĕмĕр çутă сăнпа
Курма пултăр сана.

*Сергей ВОРОНОВ,*
*7 класс.*
Елчĕк районĕ,
Таяпа Энтри шкулĕ.

*Кристина ВАСИЛЬЕВА* (Елчĕк районĕ, Аслă Таяпа) *ÿкерчĕкĕсем.*

УЯВ

# Йăлт пĕлесшĕн ачасем: хатĕрлеççĕ ыйтусем



*«Вĕренме юратман ачасем çук, кăсăклантарса яма пĕлмен аслисем пур», – шухăшпа, тен, пурте килĕшмĕ. Çапах та тĕрĕслĕхĕ пурах-тăр кунта. Арçын ачасемпе хĕр пĕрчисем çитĕнӳсемпе савăнтарасси, ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тăвасси ашшĕ-амăшĕнчен, вĕрентекенсенчен чылай килет. Вулав пирки те çакнах каламалла. Шăпăрлана пĕчĕкренех кĕнекепе туслаштармасан вăл каярахпа çӳлĕк енне хăех алă тăсасси пирки ĕмĕтленни кăлăхах. Çитĕннĕçем пачах расна кăсăкланусем тупăнаççĕ...*

Ачасем юмахсемпе кĕске калавсене юратсах вулаççĕ. Вĕсенчи асамлă ĕçсемпе тĕлĕнтермĕш пулăмсем, ырă тата сивлек сăнарсен хирĕçтăрăвĕ, кулăшла самантсем илĕртеççĕ кăна мар, шухăша та яраççĕ. Чăн-чăн çыравçăпа тĕл пулни вара тата та ытларах савăнтарать хĕр ачасемпе арçын ачасене. Сăн-питре йăл кулă вылять, пурте тимлесе автора итлеççĕ, ыйту хатĕрлеççĕ. Ара, вĕт халăх пурне те пĕлесшĕн-çке-ха.

Çакнашкал хавасла уява пуçтарăнчĕç те иртнĕ эрнере Шупашкарти В.Маяковский ячĕллĕ тĕп библиотекăна 27-мĕш шкулти виççĕмĕш класс вĕренекенĕсемпе учительсем. Çамрăк вулавçăсене тарават библиотекарьсемпе пĕрле Лев Кадкин кĕтсе илчĕ. Шăпах унăн «Воробьиный юг. Çерçи кăнтăрĕ» кĕнекине пахалама, çыравçăпа куçакуçăн калаçма килчĕç-çке-ха хăнасем. Мероприятие вулавăш ĕçченĕсем усрĕç: Лев Кириллович пултарулăхĕпе паллаштарчĕç, презентаци кăтартрĕç.

Лев Кадкин Комсомольски районĕнчи Кĕçĕн Касалта çуралнă. Ачаллах тăлăха юлнăскерĕн пурнăçĕ çăмăл пулман. Хура-шурне пайтах тӳснĕ, апла пулин те йывăрлăхсене парăнман, малаллах талпăннă. Мускаври чугун çул училищинчен, Красноярскри механизаторсен шкулĕнчен, Ишимскри педагогика институтĕнчен вĕренсе тухнă. Çĕнĕ çĕрсем усçă çĕрте те вăй хунă. Совет çарĕнче пулнă. Токарь, строитель, учитель, литература ĕçченĕ... – тĕрлĕ професси алла илнĕ Лев Кириллович. «Ишимская правда», «Сельская новь» хаçатсенче ĕçленĕ. 1966–1976 çулсенче шкул директорĕн (Тюмень облаçĕ) тивĕçĕсене пурнăçланă. 1976 çултанпа Шупашкарта пурăнать. 1978–1997 çулсенче «Чувашкабель» УАОра инженерта тăрăшнă.

Тĕрлĕ çĕрте тимлесен те çыру ĕçне пăрахман Лев Кириллович. Унăн сăввисемпе статйи, юмахĕ-калавĕ «Молодой коммунист», «Молодежный курьер», «Кладовая природы», «Чăваш ен» хаçатсенче, «Дружба», «Çилçунат», «Тетте» журналсенче пичетленнĕ. Вулакансем çыравçăн çак кĕнекисемпе паллашма пултарнă: «Царевич Комаревич. Вăрăм тунасен çĕршывĕнче», «Детство на гору спешит. Çунатлă çунашка», «Ослиный мост. Ашак кĕперĕ». Автор хайлавĕсене вырăсла çырать. Чăвашла вĕсене Раиса Сарпи, Юрий Сементер тата ытти тăлмачă ăста куçараççĕ. Лев Кириллович кĕнекисем тĕлĕнмелле ырă та сутă. Чуна пырса тивмелле çырма пĕлет автор. Вăл ачасен кăмăлне туйни те, сут çанталăк илемне асăрхама пултарни те сисĕнет. Пĕр-пĕр çивĕч ыйту тавра шухăшлаттарма, ăна татса памалли çул-йĕре шыраттарма, уйрăмах ачасене, пур çыравçă та мехел çитерейместь. Лев Кирилловичăн вара хăй еккипе пулса пырать ку. Тен, çавăнпа унăн юмахĕ-калавне ватти те, вĕтти те кăмăллать.

Чăваш кĕнеке издательствинче нумай пулмасть кун çути курнă «Воробьиный юг. Çерçи кăнтăрĕ» кĕнекене те вулавçăсем хапăлласа йышăнасса шанас килет. Шупашкарти 27-мĕш шкул вĕренекенĕ сене кăсăклантарса яма та ĕлкĕрчĕ вăл. Литература уявĕнче çыравçă сăмахне çăвăр карсах итлерĕç хĕр пĕрчисемпе арçын ачасем. Автор «Упапа кăткăсем» тата «Çерçи кăнтăрĕ» юмахсене сасăпах вуларĕ. Хайлавсемпе паллашнă хыççăн унта сăнланнă ĕç-пуçа, сăнарсене хĕрӳ сӳтсе яврĕç пухăннисем.



Хайсене хумхантаракан ыйтусене пĕр-пĕринпе ăмăртмалла, алă тăратсах, пачĕç ачасем. Темĕн тĕрли те янăрарĕ. Хăшне-пĕрне илтсессĕн тӳрех хуравлама та аптăраса тăчĕ автор. «Мĕн-мĕн çырма палăртнă? Хăвăр хайланă произведенисенчен хăшĕ чи юратни? Сюжетсене ăçтан илетĕр? Пултарулăх çăлкуçне мĕнре тупатăр? Чапшăн е савăнăçшăн çыратăр?..» – терĕç вĕренекенсем пĕрпĕрне пӳле-пӳлех.

Тĕлпулу, чăннипех те, савăнăçлă лару-тăрура иртрĕ. Ачасем çыравçă ĕçĕпе, унăн кĕнекипе чунтан интересленни кăмăла çĕклерĕ. Мероприяти вĕçленсен те виççĕмĕшсем саланма васкамарĕç. Лев Кирилловича сырса илчĕç те сăн ӳкерĕнчĕç, каллех ыйтусем пачĕç. Хăшĕ-пĕри вара кăларăма уçса пăхма ирĕк ыйтрĕ, ӳкерчĕксене курма хыпăнчĕ. Чи пахи – çакнашкал кĕнеке увĕшĕн кашниех тав турĕ, çыравçа çĕнĕ хайлавсем шăрçалама çирĕп сывлăх, вăй-хал сунчĕ.

Черетлĕ хутчен хам курса ĕнентĕм: ачасем вуçех вуламаççĕ тени тĕрĕс мар! Ырă тĕслĕх çеç кăтартмалла вĕсене. Хамăр вуламастпăр тăк пĕчĕкскерсенчен мĕн кĕтетпĕр? Ывăл-хĕре тивĕçлĕ воспитани парас тетпĕр тĕк вĕсенчен мар, хамăртан пуçламалла.

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# Çĕнтерĕве асра тытса



Совет салтакĕсем ылханлă тăшмансене çапса аркатнăранпа кăçал 70 çул çитет. Çак паллă пулăма халалласа Чăваш кĕнеке издательстви Мĕтри Кипекĕн (Дмитрий Афанасьевич Афанасьев) «Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» произведенине икĕ кĕнекене пичетлесе кăларчĕ. Малтанхи кăларăм 2014 çулта кун çути курчĕ. Иккĕмĕшĕ вара тинтерех (тиражĕ – 1000 экземпляр, ӳнерçи – Ирина Калентьева) тухрĕ.

Мĕтри Кипек вăрçă пирки чăнлăха пытармасăр, тӳремĕн çырать. Салтаксемпе офицерсенче вăл тавăру туйăмĕпе тулнă çынсене мар, Тăван çĕршыва хӳтĕлеме кар! çĕкленнĕ ывăлсене курать. Вĕсен тĕллевĕ – вĕлересси, аркатасси мар, çуралнă та хаклă çĕре ирĕке кăларасси, ăна сыхласа хăварасси. Çак чикке çивĕч туять çыравçă. Çавăнпа юнлă çулсенче те чун тасалăхне упрани, çынлăха сухатманни еплерех пысăк пĕлтерĕшлине ун сăнарĕсем те ăнланаççĕ, сăвапла тивĕç вырăнне хураççĕ.

Романа пурнăçра чăн пулнă ĕçсене тĕпе хурса çырнă. Никĕсре – 1944–1945 çулсенчи пулăмсем. Тăшмана тĕп тăвассишĕн совет салтакĕсем кăна мар, Польшăпа Чехословаки партизанĕсем те тăрăшаççĕ.

«Паттăрсем хыпарсăр çухалмаççĕ» йышши хайлавсем нихăçан та хăйсен пĕлтерĕшне çухатмаççĕ. Мĕтри Кипек романĕ те вулакансене кăсăклантарма пăрахмĕ. 1963–1966 çулта çырнăскер паян та хăй пирки калаçтарать. 1970 çулта Чăваш АССР Министрсен Канашĕн премине те тивĕçнĕ вăл. 1982 çулта вара автора К.В. Иванов ячĕллĕ Патшалăх премине парса чыслană.

ШУХĂШ



✓Саккунсем кивелеççĕ, кĕнекесем – нихăçан та.

***Эдуард Джордж Булвер-Литтон***

✓Кĕнекен илемĕпе те мар, йышĕпе те мар, пулевĕпе тата унта мĕн çырнипе усă курмалла.

***Лукиан***

✓Кĕнекен вулакана йĕркелемелле.

***Карел Чапек***

✓Кĕнекесене, çырнă чухнехи пекех, васкамасăр та тирпейлĕ вуламалла.

***Генри Дэвид Торо***

✓Кĕнекесем – ăс-тăн ачисем.

***Джонатан Свифт***

✓Кĕнекесĕр пӳрт-çурт чунсăр кĕлетке пекех.

***Цицерон***

✓Кĕнеке – пĕччен лĕх юлташĕ. Вулавра этем хăйне тупать.

***Эмиль Фаге***

✓Кĕнеке – чĕлхесĕр вĕрентекен.

***Платон***

✓Япăх кĕнекесем усăсăр кăна та мар, сиенлĕ те.

***Лев Толстой***

# Пĕррехинче

Луиза ВАСИЛЬЕВА калавĕсем

## Айăпа йышăнни

Хамран тăвата çул аслă Ваçукпа çав тери туслă эпĕ. Унпа эпир ир пуçласа мĕн каçчен урамра.

Пĕррехинче юлташăм патне хăнасем килчĕç. Ваçук çав кунран пуçласа манпа калаçми пулчĕ. Еплерех кулянтăм. Çав вăхăтрах тарăхрăм та!

Сутăнчăка мĕнле тавăрмалла-ши?

– Кур-ха, карта çинче Ваçукăн шурă кĕпи çакăнса тăрать! – терĕм самантрах савăнăçлăн.

Чупса тухрăм урама. Никам та çуккипе усă курса хайхине пылчăкпа варалăрăм. Кĕсйине вара чул катăкĕ чикрĕм. Хĕпĕртесе каялла пÿрте кĕтĕм те каллех чÿрече умне вырнаçрăм. Антиповсен картишĕнчен кам та пулин тухасса чăтăмсăррăн кĕтрĕм.

Çапла вăхăт чылай иртрĕ. Анчах кÿршĕсен хапхи уçăлса хупăннине курмарăм. Кĕçех асар-писер çил тухрĕ. Ваçукăн вараланчăк кĕпи пылчăк çине ÿкрĕ те ун урлă ула йытă каçса кайрĕ.

Çак ÿкерчĕке курсан пушшех хĕпĕртерĕм. Кăмăл çĕкленÿллĕ пулнăран алă çупса та илтĕм.

– Акă çапла кирлĕ те ăна, – терĕм йăл-ял çиçсе.

Чÿрече сакки çинче киленекенскер сулахай енне куçма тытăнтăм та... урайне ÿкрĕм. Сывлайми пулса лартăм. Пĕтĕм ÿт-пÿ сĕрленĕрен алла та хускатаймастăп вĕт! Кăштахран аран-аран ура çине çĕкленсе диван çине кайса лартăм.

...Ытларикун. Нимĕн те ыратмасть. Чăнах! Кун пек чухне мĕн тери аванçке. Пурăнас килет. Сасартăк хаваслă Ваçук куç умне тухса тăчĕ те тарăхнăран хăмпă евĕр çурăлаттăм. Ара, икĕ эрне иртрĕ, вăл вара ман пата пĕрре те каçмарĕ. Чун кÿтнĕрен выртсах маккартăм.

Каллех тавăру пирки шухăшлама тытăнтăм.

Ăшăрах тăхăнса хирелле васкарăм. Ваçуксем пăрушне ăçтарах кăкарнăши? Вĕçертсе ярас, шыраччăр пĕр эрне. Ун чухне тусăм Маньăна, тен, нихăçан та тупаймĕ. Чим-ха, аплах хăтланма путсĕр ача мар-çке эпĕ. Пăрушкана ăшшăн ачашларăм. Хăлхи çинчи шăнасене те пĕр хушă хăваласа тăтăм.

– Манечка, эсĕ Ваçукшăн пĕрре те айăплă мар, çавăнпа сана кÿрентерме сăлтавăм çук, – терĕм те килелле васкарăм.

Чунра лăпкă мар. Пÿртрен банан кĕрсе илтĕм те карта çумĕнчи сак çине вырнаçрăм. Асанне кучченеçĕ тутлă пулчĕ, çапах тарăхăва ниепле те лăплантараймарăм.

Хам вырăнтан ялт! сиксе тăтăм çеç еплерех хытă ÿкрĕм çĕр çине! Банан хуппи çине пуснă иккен эпĕ.

– Мана консерв банки пысăкăш куçăмсене мĕн тума лартса панă-ши?! – терĕм асăрханулла пулайманран хама хам вăрçса.

Шăп çав вăхăтра пуçа тĕлĕнмелле ăслă шухăш пырса çапрĕ...

Сĕтел çинчен банан хупписене илсе урама вĕçтерсе тухрăм. Хайхисене йывăç çумне пăрахрăм та çиеле хаçат хутăм. Ак çакăнта Ваçука илĕртсе килĕп те вăл шуса ÿкĕ. Эпĕ вара хăвăртрах пулăшанçи тăвăп. Эх, савăнĕ вара! Мана тав тăвасшăн пулса йăпăлтатма тытăнĕ. Мĕн тери аванчĕ те...

Хыçалта темле сасă пулнăран вăртах çаврăнтăм. Кÿршĕсен автанĕ йытта



© *Кристина АНАНЬЕВА* (Йĕпреç районĕ, Çăкалăх) *ÿкерчĕкĕсем.*

тапăннă. Хам-хам ниçта кайса кĕрейми нăйкăшать вĕт.

Куккарекку хама та кÿрентерĕ тесе тарма шухăшларăм. Йывăç çумĕнчи хаçат çине пусрăм та...

Асанне нăшиклетнипе тăна кĕтĕм.

– Ах, ачам, çак пурнăçра кама усал турăн-ши? Вилсех каятăн пулĕ тесе сехрем хăпса тухрĕ. Банан хупписене кам çакăнта килсе пăрахнă-ши? Хайхи çын алла лексен-и, пĕрре вĕтетĕпех хулăпа, – терĕ асанне çиллессĕн.

Хĕрелсе кайрăм. Ирĕксĕрех хам айăпа йышăнтăм.

– Эх, ачамккă, нихăçан та çын валли шăтăк алтма кирлĕ мар. Унта хăвах кĕрсе ÿкĕн. Çакна халĕ ăнланса илтĕн-и? – терĕ асанне сассине хăпартса.

– Ăхă, унашкал урăх путишленмĕп.

– Тата та пĕчĕкрех чухне мĕнешкел лăпкă та илемлĕ хĕрачаччĕ эсĕ. Халĕ, кур-ха, епле аташса кайрăн. Çынна усал сунакан пултăн.

Асанне вăйпа пÿрте çавăтса кĕчĕ, сĕтел хушшине лартрĕ. Çÿлĕк çинчен сăнÿкерчĕк илчĕ те ман ума хучĕ.

Турăçăм! Епле кăмăллă хĕр пĕрчи. Куçĕсем мĕн тери ăшă тата! Пĕчĕкскере тытса юратас килчĕ. Хитре сăмсинчен кăшт чĕпĕтсе илес кăмăл та çуралчĕ. Чим-ха, ара, ку эпĕ-çке! Чăнах, хама хам аран палласа илтĕм. Ку сăнÿкерчĕке курман-çке эпĕ ку таранччен те.

– Ун чухне эсĕ питĕ лăпкă та итлекен ачаччĕ. Халĕ, халĕ... тем пулнă санпа. Нимĕн те ăнланаймастăп, – терĕ асанне юнашар вырнаçнă май.

– Малашне хама питĕ йĕркеллĕ тытăп асанне, сăмах паратăп. Çынна усал тума мар, яланах пулăшма тăрăшăп, – терĕм юратнă çынна ыталанă май.

## Çулласăр урама тухмастăпах



Кăçал çуркунне питĕ ир килчĕ. Урамра шăнкăртатса шыв юхать. Ăшă енчен вĕçсе килнĕ кураксем савăннипе еплерех кранклатаççĕ.

Хутран ăсталанă кимме кÿлленчĕке ятăм та кăмăллăн пăхса тăратăп. Вăл кассăн-кассăн вĕрекен çилпе унталла та кунталла пĕр чарăнми ишет.

Эх, мĕншĕн шăна мар-ши эпĕ? Кимĕпе епле аван ярăнса çÿренĕ пулăттăм. Сăпкари пекех лайăх ĕнтĕ унта.

Акă Вова пичче чупса килни курăнчĕ. Ман тĕле çитсен чарăнса сывлăх та сунмарĕ, кимме вара пĕр шелсĕр таптаса-лапчăтса хăварчĕ. Тетте патне чупса пытăм, анчах усăлли нимĕн те тăваймарăм. Юрать шăна мар эпĕ, çакăнтах нимĕрсе хăваратчĕ-çке мана. Кирек епле пулсан та анне ачи пулма лайăх.

Килте никам та çук, халĕ мана кам çĕнĕ кимĕ ăсталаса парĕ? Çынна тăтăш пуç çапни те килĕшÿсĕр пулассăн туйăнать.

Тахçан аçа çапнă вырăнта Сашук пĕчченех вылянине асăрхарăм та унталла васкарăм. Мана курсан вăл шутсăр хĕпĕртерĕ.

– Эсĕ килни питĕ лайăх, унсăрăн çырмана пĕчченех анмалла пулатчĕ. Куратăн-и, каçхине мĕн чухлĕ кимĕ ăсталанă эпĕ! Вĕсене халĕ инçете-инçете юхтармалла пирĕн. Ну, пыратăн-и пĕрле? Иккĕн хаваслăрах пулĕ, – терĕ хайхискер кăмăллăн.

Сашука ăçтан хирĕçлеме пултарăнха? Унсăрăн кайран манпа нихăçан та вылямĕ. Теттесене илсе юр аша-аша çырманалла васкарăмăр. Туятăп: ура йĕп-йĕпе. Киле каяс шухăш çапах çукха.

Акă тусăм пĕр киммине шыва ячĕ. Ăна эпир алă çулсах ăсатрăмăр. Теприне ывăтрĕ кĕçех, унтан виççĕмĕшне. Тăваттăмĕшне янă чухне Сашук шыва шампăр! кĕрсе ÿкрĕ. Хăлаçланахăлаçлана юхса кайрĕ хайхискер. Хăраса ÿкнĕрен шари! кăшкăрса ятăм.

Çывăхра Люда аппа пулман-тăк юлташăмпа мĕн пулса тухатчĕ-ши? Вăл, фермăран таврăнаканскер, Сашука вăхăтра пулăшу пачĕ. Йĕп-йĕпе пулнăскере килех йăтса кайрĕ.

Пулса иртнĕ хыпар килтисен хăлхине те кĕнĕ иккен. Каçхине, пурте пуçтарăнсан, анне юнашар вырнаçса сăмах пуçарчĕ.

– Аслисемсĕр мĕн-ма таçта та çÿремелле? Инкеке çаклансан камăн явап тытмалла? – терĕ хайхискер ÿсĕрес килменрен кĕхĕмлетсе.

– Сашукпа пĕрле пĕвене юхса кайнă пулсан иккĕшне те пĕрле пулăсем çисе яратчĕç ĕнтĕ. Шапасем те тиркеместчĕç паллах, – терĕ урок туса ларакан аппа.

Сăмахĕсем, чăн та, шухăша ячĕç. Тепĕр тесен, Сашук хăй айăплă кунта. Чĕнмелле марччĕ мана пĕрле. Унăн амăшĕ шучĕпе айăпли ывăлĕ мар – эпĕ.

Кĕçнерникун Анук аппа Сашука пирĕн пата хăварчĕ. Хăй Канаша çитсе килесси пирки хыпарларĕ. Иксĕмĕр кăна юлсан Сашук çуркуннехи шăна пек чĕрĕлчĕ. Шкаф, шифоньер алăкĕсене темиçе хутчен уçа-уça пăхрĕ. Кăмака çине те улăхса анма ÿркенмерĕ. Мĕн шырать – пĕлместĕп. Кравать çинче кушакпа алхаснă чухне манăн хĕрлĕ тутăра те юри, те ăнсăртран çурса пăрахрĕ. Кÿреннипе макăрсах ятăм.

– Мĕн ахалех куççульленетĕн? Халĕ эсĕ пĕрех шакла. Вăрăм çÿçлисем çеç тутăр çыхаççĕ, – терĕ тăрăст! тăрăст! сиккелесе.

Хамăр килте такама хуçалантаратпăр иккен. Мĕншĕн куç умĕнчех кулать Сашук? Эпĕ шакла пулнишĕн ăна мĕн ĕç? Çÿç çăрарах ÿстĕр тесе ĕнер касса ячĕç те.

... Тăваттăмĕш эрне кăнтăрласерен килте пĕччененех ларатăп. Тунсăх ан пултăр тесе анне хитре мечĕк те туянса пачĕ. Унпа аппа та вылясшăн, анчах ирĕк памастăп. Шăтарсан... Саплама тум мар-çке вăл.

Çулласăр та урама тухмастăп халĕ. Сашука курасран шикленетĕп. Вăл манран мечĕке туртса илесрен питĕ сехĕрленетĕп. Çавăнпа та анне парнине типтерлĕ усрасшăн...

# Икĕ патша
юмах



Пуръяннă тет пĕр çĕршывра икĕ патша: Хветут тата Ехрем. Вĕсем яланах пĕр-пĕринпе вăрçăннă тата тавлашнă тет.

– Эпĕ санран пуянрах! – тенĕ Хветут патша хăй пурлăхне шĕвĕр пӳрнисене хуçлата-хуçлата шутланă май.

– Çук! Эпĕ санран темиçе хут та пуянрах пулнине пурте пĕлеççĕ... – тенĕ Ехрем патша хăйĕн патшалăхне савăнса та мăнаçлăн пăхса çаврăнса.

Çапла вара пурăннă вĕсем пĕр-пĕрне кураймасăр...

Пĕррехинче Хветут патшалăхĕ çине Аçтаха тапăнать. Йывăр самана çитет патша пурнăçĕнче. Çак усал та ирсĕр Аçтаха Хветут патшалăхне çулăмпа çунтарма тытăнать. Чылай çапăçать патша çарĕ усала хирĕç. Анчах вăй тан мар пулнăран ниепле те çĕнтереймест.

Тискер Аçтаха Хветут çарĕ çине тапăнни пирки кĕçех Ехрем патша та илтет. Нимĕн шухăшласа тăмасăр кӳршине пулăшма хăйĕн вăйлă çарне ертсе каять. Темиçе кун, темиçе каç çапăçаççĕ вĕсем ирсĕр Аçтахана хирĕç. Пĕччен çĕнтерме çуккине туйса-курса тăнăран икĕ вăя пĕрлештереççĕ те усала тĕп тăваççех. Лаш! сывласа яраççĕ çĕнтерӳçĕсем.

Çак кунран пуçласа вара Хветут патшапа Ехрем патша туслă пурăнма пуçлаççĕ. Çапла çав, пĕр-пĕрне йывăр вăхăтра пулăшсан, çур сăмахран ăнлансан тата туслăха упрама тăрăшсан пур йывăрлăха та çĕнтерме пулать иккен!

***Даниил СЕРГЕЕВ,***
***3 класс.***

Çĕрпӳ районĕ,
Чурачăк шкулĕ.

✎ Александр ПЛЕХАНОВ




Пирĕн пултарулăх

## Анне



Манăн анне чи хитри,
Чи илемли, маттурри.
Эпĕ ăна юрататăп,
Лайăххи кăна сунатăп.
Пултăрччĕ манăн анне
Чи телейли çĕр çинче.

***Светлана ЕГОРОВА.***

Куславкка районĕ,
Энтри Пасар шкулĕ.

✎ Александр ПЛЕХАНОВ

ФОТО КОНКУРС

## "От улыбки станет всем светлей..."



Муркаш районĕ, Отарккă.



Шăмăршă районĕ, Виçпӳрт Шăмăршă пуçламăш шкул ача сачĕ.

## Парне – чечек

Аннене эп юрататăп,
Ăна питĕ хисеплетĕп.
Уявпа та саламлатăп,
Хитре чечек парнелетĕп.

***Алина ВАЛЕРИАНОВА,***
***3 «б» класс.***

Шупашкар,
3-мĕш шкул.
**АВТОР ӳкерчĕкĕ.**



## Ытарайми

Юрататăп аннене,
Унăн ăшă кăмăлне,
Ылттăн, çепĕç аллине,
Ытарайми сассине.

***Инесса ЗАЙЦЕВА.***

Комсомольски районĕ,
Хырай Ĕнел шкулĕ.

## Чи хакли

«Альбин, Альбин – аллă пин», –
Тет атте ман аннене.
Ман анне – чи хаклă çын,
Сутмăп ăна ĕмĕрне!

***Алеша СЕНАТОРОВ,***
***2 класс.***

## Шанчáк

«Çирĕп шанчăкăм эс ман!» –
Тет атте ман аннене.
Ма çапла калать ялан?
Пĕлтĕм эпĕ словарьте.
Туйăр пулĕ мĕншĕнне?
Надя ятлă ман анне!

***Алеша ФРОЛОВ***
***2 класс.***

Çĕмĕрле районĕ,
Хутар шкулĕ..

**Туссем, «Тетте» журнал çырăнăр, «Электричество – детям не игрушка» конкурса хутшăнса чаплă парнесем çĕнсе илĕр!**

# Хаваслă 2015 самант

## Сăмахкаçмăшсем



1. Тĕнчери чи пысăк пушхир. 2. Турат «çимĕçĕ». 3. Хырăмĕ пур, çурăмĕ çук (туп.юм.). 4. Кăнтăр Америкăри юханшыв. 5. Тинĕс пулли. 6. Пуçватмăш. 7. Пуç тăрринчи çĕршыв. 8. Авалхи Грузи çĕршывĕн хĕрарăм патши. 9. Сутуçăн «юлташĕ». 10. Йĕпе-сапа вырăн. 11. Упăте тĕсĕ. 12. Сыватмăшри пӳлĕм. 13. Испанири хула. 14. Вырăс актерĕ, А.Абдуловпа «Уно моменто» юрăна шăрантаракан. 15. Кăçалхи çул палли. 16. Чăваш юрăçи.



**Сылтăмалла:** 1. Кĕрешӳ меслечĕ. 7. Çĕршывăн тĕп хули. 11. Пĕр-пĕринпе сăмах пуçарни. 13. Африкăри юханшыв. 14. Çавана çивĕчлетекен. 15. Скандинавири çĕршыв. 16. Карлăн кларнетне вăрлакан. 17. Вăрман çимĕçĕ. 18. Тĕрĕ пайĕ. 20. Литературăри сăнар – йĕрлевçĕ – ... Пинкертон. 22. Курăк. 24. Самолет пусми. 29. ...-сухра. 31. Коми республикин тĕп хули. 32. Пиншак мар. 33. Ăста. 34. Полицин ятарлă ушкăнĕ. 35. Аз, буки, ... 36. Казаксен пуçлăхĕ. 38. Михалков та, Джигурда та ... 39. Театрти «арена». 40. Жокейăн пушши. 42. Вулканти шĕвек. 45. Урана тăхăнмалли хатĕр. 47. Ĕлĕкхи палач. 49. Французсен виçи. 51. АПШ актриси. 52. Швецин чапа тухнă биатлонисчĕ. 53. Вырăс ӳнерçи. 54. Вăл Моника пани рольне вылянă. 55. Авалхи хĕç-пăшал. 55. Америкăри шывсикки. 57. Икерчĕ юлташĕ. 58. Çурçĕрти пулă.

**Аялалла:** 2. АПШри штат. 3. Азири сăрт-ту. 4. Вырăссен ĕлĕкхи тумтирĕ. 5. Самолет пайĕ. 6. Пĕр-пĕр япалана кăларма ирĕк паракан хут. 7. Тĕрлĕ тĕслĕ çип. 8. Вăл туратăн пур. 9. Юмахри йытă ячĕ. 10. Стена çинчи агитка. 12. Тĕнчери пысăк пушхир. 19. Астронавт мар. 21. Вăтам Азири канал. 23. О.Бальзак романĕ. 25. Хими приборĕ. 26. Америкăри юханшыв. 27. Циркри гимнаст. 28. Грейдер «тăванĕ». 29. Аякри шурсухал. 30. Хими препарачĕ. 37. Пурне те пĕлекен. 40. Кĕлетке пайĕ. 41. Чăваш спортсменки, Олимп чемпионĕ. 43. Авалхи грексен йышăну тăвакан ушкăнĕ. 44. Мультфильмри сăнар. 45. Çырса тултармалли хут. 46. Кĕвĕçӳ. 47. Европăри сăрт-ту. 48. Фольклор жанрĕ. 49. Капрон «тусĕ». 50. Чăваш халăх поэчĕ.



**Сылтăмалла:** 1. Европăпа Ази чикки. 3. Тем тума та пĕлекен. 8. ... кĕперĕ. 9. Чăваш юрăçи. 12. Юшкăн вырăн. 13. Казаксен пуçлăхĕ. 14. Юлташна пĕлес тесен тăвара çавăн чухлĕ çимелле. 15. Килти выльăх. 17. Унран аслă пулма хушман. 19. Вĕçенкайăк. 22. Вăрманти кайăк. 25. Республикăри юханшыв. 27. Х.Уяр романĕ. 28. Чăваш çыравçи. 31. Çĕр мăйăрĕ. 32. Сăвăç, В.Давыдов-... 33. «Любэ» ушкăнăн хичĕ. 34. Нухрат.

**Аялалла:** 1. Ял пайĕ. 2. Арменири сăрт-ту. 4. Савăт-сапа. 5. Типсе пыракан тинĕс. 6. Кăçалхи çул палли. 7. Тĕнчери чи пысăк пушхир. 10. Пĕвери «юрăç». 11. Ӳссе çитеймен вăрман. 16. Талăк. 18. Хăшĕ-пĕри унпа хăратать. 20. Мушкетерсенчен пĕри. 21. Ăна ах! тенипех тупаймăн. 22. Пулăсене улталакан. 23. Анне амăшĕ. 24. Хырăмĕ пур, çурăмĕ çук (туп.юм.). 26. Тинĕс офицерĕн хĕç-пăшалĕ. 29. Ут. 30. Лаша пуласси унранах паллă.

## Пĕр-пĕринчен татăлмасăр, Малалла утар юлмасăр



1. Пахча çимĕç. 2. Нимсĕр ... те пиçмест (ват.сăм.). 3. Унпа теннисист вылять. 4. Красноармейски районĕнчи ял. 5. Вилĕмсĕр «Нарспи» авторĕ. 6. Ыйту-хурав евĕрлĕ ăмăрту. 7. Панулми сорчĕ. 8. Ăна буржуй пăчăрпа пĕрле çинĕ. 9. Пулас генерал. 10. Хуч-хуч хучала, варри мунчала (туп.юм.). 11. Хуралтă. 12. Хĕн. 13. Вĕçенкайăк. 14. Авалхи пăрахут. 15. Кăнтăр Америкăри çĕршыв. 16. Пĕчĕк мучи мунча тăвать (туп.юм.). 17. Платникĕн ĕç хатĕрĕ. 18. Кăçалхи çул палли. 19. Утăулăм вырăнĕ. 20. Кил ăшши. 21. ... кĕперĕ. 22. Тĕлĕнтермĕш. 23. Арменипе Турцири сăрт-ту. 24. Вăл пилĕк авсан тухать е сирпĕнсе каять.

***Николай КРАСНОВ*** (Йĕпреç районĕ) **хатĕрленĕ.**